БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Июль
11
ШĂМАТКУН
№ 134 (9043)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ çинчен (1 стр.).
СССР Верховнăй Совет Президиумĕнче (1 стр).
«Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» памалли тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен комитетра. Японири обществăлла деятеле Икуо Оямăна тĕнчери Сталинла премi пани (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Н. Волков.—Ячĕшĕн йышăннă решенисем. Т. Иванов.—Куславкка райкомĕн пленумĕ (2 стр.).
Я. Маклашкин.—Промысла коопераци промышленноçне малалла аталантарассишĕн (2 стр.).
Обществăлла вылях-çĕрлĕх валли апат ытларах хатĕрлер! (3 стр.).
Л. Скоробогатый.—Аслă туслăх (3 стр.).
С. Угандеев. — Чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес пирки (3 стр.).
Китайри предприятисенче Совет çĕршывĕнчи ĕçмеслечĕсемпе усă кураççĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Ли Сын Манăн провокацилле ĕçĕсем çинчен Корейăри хаçатсем мĕн çыраççĕ (4 стр.).

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ çинчен

Çак кунсенче Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ пулса иртрĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ Л. П. Берия партие тата государствăна хирĕç тунă преступникла ĕçсем çинчен Центральнăй Комитет Президиумĕн—Г. М. Маленков юлташăн докладне итлесе сӳтсе яврĕ. Л. П. Берия, Совет государствине хавшатса ют çĕршыв капиталне усă тăвас тесе, Правительствăна тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине СССР Шалти ĕçсен министерствине пăхăнтарса тăмалла тума ирсĕррĕн хăтланнă. Çак ирсĕр ĕçсем çинчен сӳтсе явса, Центральнăй Комитет Пленумĕ Л. П. Берияна — Коммунистсен партийĕпе совет халăхĕн тăшманне—КПСС Центральнăй Комитечĕн составĕнчен тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн ретĕнчен кăларма решени йышăнчĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕнче

Юлашки вăхăтра Л. П. Берия, Совет государствине хавшатса ют çĕршыв капиталне усă тăвас тесе, государствăна хирĕç преступникла ĕçсем тунине тупса палăртнă май, ку ыйту пирки СССР Министрĕсен Совечĕ пĕлтернине пăхса тухса, СССР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăннă:

1) Л. П. Берияна СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕнчен тата СССР Шалти ĕçсен министрĕнчен кăларас.

2) Л. П. Берияна преступникла ĕçĕсем çинчен пăхса тухма СССР Верховнăй Судне парас.

Партин, правительствăн, совет халăхĕн никам аркатайми пĕрлĕхĕ

Никам аркатайми хăватлă та творчествăлла пысăк вăйлă Совет çĕршывĕ коммунизм çулĕпе шанчăклăн малалла пырать. XIX-мĕш съезд решенийĕсене пурнăçласа, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ хăйĕн Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те хăватлăн аталантарса пырать. Коммунизм строительствин питĕ пысăк задачисене пурнăçласа, совет халăхĕ партипе правительство тавра тата та тачăрах пĕтĕçрĕ. Пирĕн Тăван çĕршывăн экономикăпа оборона вăй-хăвачĕ пĕрмаях тĕрекленсе пырать, рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мĕнпур совет çыннисен пурнăçне малалла лайăхлатас тĕлĕшпе чылай çитĕнӳсем тунă.

Пирĕн социализмла хăватлă индустри, пур енĕпе те аталаннă йывăр промышленность—социализмла экономикăн никĕсĕсен никĕсĕ пур. Пирĕн машиностроени пĕрмаях малалла вăйланса пырать, вăл халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене ку чухнехи техника парса тăрать. Малта пыракан совет наукине аталантарас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Пирĕн çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕ çӳлĕ пусăма çĕкленчĕç. Унăн халĕ, тавар хакĕсене йӳнетес тĕлĕшпе парти тытса пыракан политика никĕсĕ çинче, хуласемпе ялсенчи халăхăн ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме пур майсем те çителĕклĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче юсаса çитерне ялхуçалăхне вăрçăчченхинчен те ытларах çĕнĕ техника панă.

Çак мĕнпур çитĕнӳсем пирĕн çĕршыври рабочи класпа хресченсен çирĕп союзĕн результачĕ. ССР Союзĕнчи халăхсен çирĕпленсе пыракан туслăхĕн тата совет обществин моралĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ пĕрмаях тĕрекленсе пынин результачĕ, Коммунистсен партийĕ туса хатĕрленĕ политикăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пынин результачĕ пулаççĕ.

Совет правительстви, мир политикине çирĕппĕн те пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырса, пĕр хутчен кăна мар çапла пĕлтерне: пĕтĕм тĕнчери пурнăçăн татса паман, тавлашуллă ыйтăвĕсене пурне те интересленекен çĕршывсем хушшинче калаçусем ирттернипе татса пама пулать. Çапла калание мĕнпур халăхсем пĕр кăмăллă пулса ырласа йышăнчĕç. Совет правительствин мир ĕçĕнчи çĕнĕ пуçарăвĕ Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвне çирĕплетрĕ, пирĕн çĕршывăн авторитетне ӳстерчĕ, мире сыхласа хăварассишĕн тата çирĕплетессишĕн пĕтĕм тĕнчипе пыракан юхăма чылаях вăйлатрĕ.

Империализмла лагерьте пачах урăхла. Унта капитализмăн пĕтĕмĕшле кризисĕ малалла çивĕчленсе пырать, Америка империализмĕ ытти çĕршывсене хĕсес тата вăйпах хăйне пăхăнтарас политика тытса пырать. капитализмла çĕршывсем хушшинчи хире-хирĕçӳсем ӳсеççĕ, ĕççынни массисем пĕрмаях чухăнланса пыраççĕ.

Çапла вара, тĕнчери пĕтĕм аталану çакна кăтартса парать: пĕр енчен, демократипе социализм вăйĕсем пĕрмаях малалла вăйланса пыраççĕ, тепĕр енчен вара, империализмла лагерь вăйĕсем пĕтĕмĕшпех хавшаса пыраççĕ. Çакă вăл империалистсене, империализмла реакцилĕ вăйсене хытă хăратать, çавăнпа та вĕсем мирпе демократи тата социализм лагерĕн, пуринчен ытла, çав лагерĕн ертсе пыракан вăйĕ пулса тăракан Совет Союзĕн ӳссе пыракан хăватне хавшатма хăтланаççĕ Империалистсем демократипе социализм лагерĕнче хăйсен валли пăсăлса пĕтнĕ тĕрлĕ элементсене шыраççĕ, хăйсен агентурин ирсĕр ĕçĕсене вăйлатса пыраççĕ.

Паян «Правда» хаçатра Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ çинчен пĕлтерни пичетленет. Ку пĕлтерӳре çапла калана:

«КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ Л. П. Берия партие тата государствăна хирĕç тунă преступникла ĕçсем çинчен Центральнăй Комитет Президиумĕн—Г. М. Маленков юлташăн докладне итлесе сӳтсе яврĕ. Л. П. Берия, Совет государствине хавшатса ют çĕршыв капиталне усă тăвас тесе, Правительствăна тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине СССР Шалти ĕçсен министерствине пăхăнтарса тăмалла тума ирсĕррĕн хăтланнă. Çак ирсĕр ĕçсем çинчен сӳтсе явса, Центральнăй Комитет пленумĕ Л. П. Берияна—Коммунистсен партийĕпе совет халăхĕн тăшманне—КПСС Центральнăй Комитечĕн составĕнчен тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн ретĕнчен кăларма решени йышăнчĕ».

Çак ыйту пирки СССР Министрĕсен Совечĕ пĕлтернине пăхса тухса, СССР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăннă:

1) Л. П. Берияна СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕнчен тата СССР Шалти ĕçсен министрĕнчен кăларас.

2) Л. П. Берияна преступникла ĕçĕсем çинчен пăхса тухма СССР Верховнăй Судне парас.

Халăхăн халĕ тăрă шыв çине кăларнă тăшманĕ— Берия карьеристла ултавлă майсемпе хăтланса руководствăна шăвăнса кĕнĕ. Партие хирĕçле тата государствăна хирĕçле ĕçсене Берия ĕлĕкрех тарăнăн пытарса пурăннă пулсан, юлашки вăхăтра вара вăл, иртĕхсе кайса, хăйĕн чăн-чăн сăн-сăпатне кăтартса пама пуçларĕ, вăл партипе совет халăхĕн усал тăшманĕ пулни курăнчĕ. Берияна преступникла ĕçĕсем юлашки вăхăтра çакăн пек вăйланни пирĕн государствăшăн тăшманла вăйсен—пĕтĕм тĕнчери реакцилле вăйсен—Совет Союзне хирĕç тăвакан аркатуллă ĕçĕсем вăйланнинчен килнĕ. Пĕтĕм тĕнчери империализм хăйĕн ирсĕр ĕçне вăйлатсан—унăн агентурин ĕçĕсем те вăйланаççĕ.

Власа хăйĕн аллине тытса илес тĕллевпе тунă хăйĕн тискер ĕçĕсене Берия çакăнтан пуçланă: вăл партипе правительствăна Шалти ĕçсен министерствине пăхăнтарма хăтланнă, МВД-ăн центртипе вырăнти органĕсемпе партипе тата унăн руководствине, СССР Правительствине хирĕç кĕрешес ĕçре усă курма хăтланнă, Шалти ĕçсен министерствин работникĕсене вăл хăйне парăннине кура ĕçе уйăрса лартнă.

Халĕ çакна кăтартса панă: ялхуçалăхĕнчи питĕ кирлĕ те вăраха ямалла мар ыйтусене татса парассине Берия юриех шухăшласа кăларнă тĕрлĕ сăлтавсемпе чарса тăнă. Çакна ăна колхозсене хавшатас тата çĕршыва апат-çимĕç продукчĕсем парса тăрас тĕлĕшпе йывăрлăхсем тăвас тесе тунă.

Берия тĕрлĕ ултавлă та тискер майсемпе ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхне—нумай нацилле социализмла государство никĕсĕсен никĕсне тата тăванла советлă республикăсен мĕнпур çитĕнĕвĕсен тĕп условине аркатса тăкма, ССР Союзĕнчи халăхсене хирĕçтерсе яма, союзлă республикăсенче буржуаллă-националистла элементсене вăйлатма хăтланнă.

Совет законлăхне çирĕплетмелли çинчен, законсăр хăтланнисене тата йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме кирли çинчен партин Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тӳррĕнех кăтартса панисене Берияна ирĕксĕрех пурнăçлама тивнĕ, анчах вăл çав кăтартусене пурнăçлас ĕçе юриех чарса тăнă, чылай чухне вара çав кăтартусене пăсма хăтланнă.

Никам сирсе пăрахайми фактсем Берия ĕнтĕ коммунист сăн-сăпатне çухатни çинчен, вăл буржуалла перерожденец пулса тăни çинчен, ĕçре тĕнчери империализм агенчĕ пулса тăни çинчен калаççĕ. Çав авантюрист тата ют çĕршывсенчи империализмла вăйсен тарçи, пирĕн Коммунистсен партине аркатса тăкас, партин нумай çулсем хушшинче туса хатĕрленĕ политикине капитулянтла политикăпа, юлашки шутран капитализм каялла таврăнасси патне илсе пыракан политикăпа улăштарас тĕллевпе партие тата çĕршыва ертсе пырассине хăй аллине тытса илме ĕмĕтленсе пурăннă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Президиумĕ вăхăтра та татăклă мерăсем йышăннипе,—вĕсене партин Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ пĕр шухăшлă пулса пĕтĕмĕшпех ырланă,—Берияна партие хирĕçле тата государствăна хирĕçле преступникла ĕмĕчĕсене тăрă шыв çине кăларнă. Берияна преступникла авантюрине пĕтерсе лартни тепĕр хут, тата тепĕр хут çакна кăтартса парать: ют çĕршывсенчи империалистсен Совет Союзне хирĕçле кирек мĕнле планĕсем те партин, правительствăн, совет халăхĕн никам аркатайми хăватлă пĕрлĕхĕ çине пырса çапăнса арканнă тата малашне те арканса пырĕç.

Çавăнпа пĕрлех, Берия ĕçĕнчен политикăлла уроксем тата тивĕçлĕ выводсем тăвас пулать.

Пирĕн руководствăн вăйĕ—вăл коллективлă, пĕтĕçуллĕ тата пĕр шухăшлă пулнинче. Руководство коллективлă пулни—пирĕн партири руководствăн чи çӳлĕ принципĕ. Çак принцип уйрăм çынна ытла пысăка хурса мухтани сиенлĕ пулни çинчен, ун пек тума кирлĕ марри çинчен Маркс каланă шухăшсемпе пĕтĕмпех килĕшсе тăрать. «Уйрăм çынна ытла пысăка хурса мухтас кирек мĕнле йăлана та кăмăлламан пирки,—тесе çырнă Маркс,—Интернационал пурăннă вăхăтра манăн тава тивĕçлĕ ĕçсене палăрса тăрлĕ çĕршывсенчен янă тата мана йăлăхтарса çитернĕ çырусем çинчен эпĕ çынсене нихçан та пĕлтермен,—сайрахутра вĕсемшĕн ятланисĕр пуçне, эпĕ вĕсем çине нихçан та ответ паман. Коммунистсен вăрттăн ĕçлекен обществине эпĕ Энгельспа пĕрле малтанхи хут кĕнĕ чухне общество уставĕнчен уйрăм çын авторитечĕ умĕнче тĕшмĕшле пуç таясси пирки каланисене пурне те кăларса пăрахнă хыççăн çеç кĕтĕмĕр». Политикăлла коллективлă опыт кăна, марксистла-ленинла теорин наукăлла никĕсĕ çине таянса ĕçлекен Центральнăй Комитетăн коллективлă ăслăлăхĕ кăна партие тата çĕршыва тĕрĕс ертсе пыма, парти речĕсен никам пăсмалла мар пĕрлĕхне тата пĕтĕçӳлĕхне туса хума, пирĕн çĕршывра ăнăçлăн коммунизм туса пыма май парать.

Кирек хăш работника та, вăл кирек мĕнле ĕçре тăрать пулин те, парти пĕрмаях тĕрĕслесе тăмалла. Парти организацийĕсем мĕнпур организацисемпе ведомствăсен ĕçне, ертсе пыракан мĕнпур работниксен ĕçне тăташăх тĕрĕслесе тăма тивĕçлĕ. Çав шутрах Шалти ĕçсен министерствин органĕсен ĕçне те яланах тата тимлĕн тĕрĕслесе тăрас пулать. Çакă вăл—право кăна мар, парти организацийĕсен тӳрремĕнех туса пымалли тивĕçĕ.

Партипе совет организацийĕсен, пĕтĕм ĕçĕнче коммунистсен тата мĕнпур ĕççыннисен революциллĕ сыхăлăхне ӳстермелле. Капитализмла йĕритавралăх пур чухне вăл сăтăрла ĕçсем тума пирĕн пата хăйĕн агенчĕсене ярса тăрать тата малалла та ярса тăрĕ. Çакна асра тытас пулать, ăна нихçан та манма юрамасть, империализмла разведкăсене тата вĕсен тарçисене хирĕç хамăрăн хĕçпăшала яланах çивĕч тытса тăмалла.

Работниксене вĕсен политикăлла тата ĕçлĕ пахалăхĕсене кура суйласа лартмалли партилле принципа çирĕппĕн пурнăçласа пымалла.

Пирĕн партин никам сĕнтерейми вăйĕ—вăл массăсемпе, халăхпа таччăн тата уйрăлми çыхăну тытнинче. Задача çакăнта пулать: çав çыхăнăва çирĕплетсе тата анлăлатса пымалла, ĕççыннисен ыйтăвĕсем çине тимлĕн пăхмалла, рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин — мĕнпур совет çыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллех тăрăшмалла.

Партин чи таса тивĕçĕ—ССР Союзĕнчи халăхсен нихçан хавшами туслăхне малалла тĕреклетсе пырасси, пирĕн нумай нацилле государствăна тĕреклетсе пырасси, совет çыннисене пролетарилле интернационализм майлă воспитани парасси, буржуалла национализм кирек мĕнле майпа та палăрнисене пурне те хирĕç татăклăн тата пĕр килĕшсе тăмасăр кĕрешесси.

Пирĕн халăхăн творчествăлла вăйĕсене мобилизацилесе, парти, совет, профсоюз, комсомол организацийĕсен çав вăйсене партин XIX-мĕш съезчĕ лартнă задачăсене ăнăçлă пур[illegible] ĕçре пирĕн мĕнпур резервсемпе та[illegible] майсемпе туллин усă курас тĕллеве пăхăнтармалла.

Массăсем хушшинче партилле пропагандăпа политикăлла воспитани ĕçне тĕпренех лайăхлатас пулать. Марксистла-ленинла теорие натчетчикла, догматикла вĕренмелле мар, уйрăм формулировкăсемпе цитатăсене кăна мар, Маркс — Энгельс— Ленин—Сталинăн пурне те сĕнтерсе пыракан, тĕнчене урăхлатса çĕнетекен революцилле вĕрентĕвĕн чăн-чăн шухăшĕсене ăнланса илмелле—çакă пулать те пирĕн пропагандăн задачи.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановление пĕтĕм парти, пĕтĕм çĕршыв пĕр кăмăллăн тата хĕрӳллĕн ырласа йышăнать. КПСС Мускав область комитечĕпе хула комитечĕн ĕнер Мускаври тата Мускав облаçĕнчи парти активĕпе пĕрле пулса иртнĕ пĕрлешӳллĕ пленумĕ Берия сутăнчăкла ĕçсем тунă пирки пĕтĕм чĕререн пурте тарăхнине палăртса КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановление пĕр шухăшлă кăмăллă пулса ырларĕ. Партин Киев область комитечĕпе хула комитечĕн активĕпе пĕрле пулса иртнĕ пĕрлешӳллĕ пленумĕ, çавăн пекех партин ытти чылай организацийĕсенче те çавнашкал решенисем йышăннă.

Генилле Ленин 50 çул каялла туса çирĕплетнĕ парти, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ питех те пысăк вăй пулса ӳссе çитĕнчĕ. Ленин ертсе пынипе, Ленинăн ученикĕ пулнă, унăн ĕçне малалла туса пынă аслă Сталин тата вĕсен соратникĕсем ертсе пынипе кĕрешӳсенче тупăнса пиçĕхрĕ.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, унăн кĕрешӳ ялавĕ тавра таччăн пĕтĕçсе, совет халăхĕ хăйĕн историллĕ аслă ĕçне туса пырать. Парти, правительство тата халăх таччăн пĕтĕçнипе пирĕн çĕршыв хăйĕн çулĕпе—коммунизм тумалли мухтавлă çулпа шанчăклăн та çирĕппĕн малалла сĕнтерсе пырать.

(«ПРАВДА» хаçатăн июлĕн 10-мĕшĕнчи умстатьи).

„Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн" памалли тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен комитетра

Японири обществăлла деятеле Икуо Оямăна тĕнчери Сталинла премi пани

Кĕçнерникун, июлĕн 9-мĕшĕнче, Кремльте, Свердловски залра мир ĕçĕшĕн хастарлă кĕрешекен паллă çынна—Японин мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен комитечĕн председательне **Икуо Ояма** профессора тĕнчери Сталинла премi панă. Премi панă çĕрте совет общественноçĕн представителĕсем йышлăн пулнă.

Лауреата саламлама Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет комитечĕн членĕсем, Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕн, Совет писателĕсен союзĕн, Совет çамрăкĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕн членĕсем, СССР Наукăсен академийĕн институчĕсен тата Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан государство университечĕн научнăй сотрудникĕсем пынă. Кунта пухăннисем хушшинче—ученăйсем, писательсем, совет культурипе искусствин деятелĕсем, Мускаври предприятисенчи стахановецсем, совет пичечĕн представителĕсем.

Унта Японин пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен Копенгагенри конгресне кайнă делегаци пуçлăхĕпе Итоэ Хамада госпожапа пĕрле делегаци членĕсем тата Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕн участникĕсем Японири профсоюз деятелĕ Того Камедăпа Масао Ионекава профессор пынă.

Кăнтăрла иртни икĕ сехет... Зала тĕнчери Сталинла премi лауреачĕ Икуо Ояма профессор тата унăн арăмĕ Ояма госпожа, «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» памалли тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет председателĕ Д. В. Скобельцын, комитет членĕ И. Г. Эренбург, Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен совет комитечĕн председателĕ Н. С. Тихонов тата ыттисем те пырса кĕреççĕ. Зала пухăннисем миршĕн тăракансен пĕтĕм тĕнчери юхăмĕн паллă деятельне, мире юратакан, демократилле Японин тăвассишĕн нумайранпа хастарлă кĕрешекен Оямăна тăвăллăн алă çупса саламлаççĕ.

Тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет йышăннă постановление вырăсла тата японецсен чĕлхипе вуласа параççĕ. Çав постановлени тăрăх Икуо Ояма профессора «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» тĕнчери Сталинла премi памалла тунă.

Д. В. Скобельцын академик кĕске сăмах калать. Вăл Япони представительне тĕнчери Сталинла премi памалла тунин пĕлтерĕшĕ çинчен, лауреатăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калать, Икуо Ояма милитаризма хирĕç, Инçет Хĕвелтухăçĕнче мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçре питĕ пысăк та чаплă ĕçсем тунине палăртать. Скобельцын академик Икуо Оямăна лауреат дипломне тата ылтăн медаль панă чухне залра тепĕр хут тăвăллăн алă çупни янăраса каять.

Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен совет комитечĕн председателĕ Н. С. Тихонов писатель, Г. Ф. Александров академик, Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕн членĕ, медицина наукисен докторĕ Е. А. Васюкова профессор, Борис Агапов писатель, Мускав университечĕн профессорĕ А. И. Ефимов лауреата саламласа ăшă сăмах калаççĕ.

Унтан Япони хĕрарăмĕсен делегацийĕн членĕ, Пĕтĕм тĕнчери мир премийĕн лауреачĕ (ăна çав премие Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ памалла тунă) Тосико Акамацу госпожа сăмах тухса калать. Вăл хăйĕн учительне Икуо Ояма профессора хĕрӳллĕ саламлать. Вăл каланине пурте ăшă кăмăлпа ырлаççĕ.

Тĕнчери Сталинла премi лауреачĕ Икуо Ояма хăйне ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕшĕн хавхаланса ответлă сăмах каланă. Унăн сăмахне пурте питĕ тимлĕн итленĕ.

В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул çитес умĕн

ХАРЬКОВ. В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул çитес умĕн Украина ССР-ĕнчи кĕнеке палати унăн произведенийĕсене Украинăра мĕн чухлĕ кăларнине шутласа пăхнă.

Совет влаçĕ пулнăранпа Украинăра В. В. Маяковский произведенийĕсене 45 хут пичетлесе кăларнă. Вĕсен пĕтĕм тиражĕ—1.286 пин экземпляр. Кĕнекесене украинла, вырăсла тата ытти чĕлхесемпе те пичетлесе кăларнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче Маяковский произведенийĕсене 21 хут, пĕтĕмпе 890 пин экземпляр пичетлесе кăларнă.

АШХАБАД. Государствăн Карл Маркс ячĕпе тăракан библиотекинче В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул çитнĕ май выставка уçаççĕ. Выставкăра Маяковскин пурнăçĕпе творчествине кăтартса паракан фотоӳкерчĕксем, картинăсен репродукцийĕсем нумай.

Туркменири государство издательстви В. В. Маяковскин «Лайăх» ятлă поэмине туркмен чĕлхипе пичетлесе кăларма хатĕрленет. Поэт çырнă «Америка çинчен», «Ачасене», «Кам пулмалла?» ятлă сăвăсемпе очеркĕсене тата ыттисене те туркмен чĕлхи çине куçарнă. (ТАСС).

Тырпул пухса кĕртес ĕçе механизацилеççĕ

ПЕНЗА. Облаçри уй-хирсенче тырпулсем пулса çитеççĕ. Тырпул пухса кĕртмелли вăхăт çывхарса килет. Тĕштырăсене пĕтĕмпех комбайнсемпе пухса кĕртеççĕ. Нумай çĕрте ĕçе комплекслă механизацилеççĕ. Çапла вара комбайнпа тырă вырнă вăхăтра хăмăла сухаласа пыма, улăма пуçтарса купалама тата тырă тасатма май килет. 200 ялхуçалăх артелĕнче механизациленĕ итемсем тунă. Кун каçиччен комбайнпа вырса çапнă тырра çав кунхинех механизациленĕ итемсем çинче тасатса пĕтереççĕ. 230 колхозра механизациленĕ сушилкăсем тунă.

ОРЕЛ. Тырпул пухса кĕртмелли кунсем çывхарса килеççĕ. Колхозсемпе совхозсен уйĕсене çĕршер комбайн илсе тухнă.

Облаçри ялхуçалăх ĕçченĕсем тĕштырăсене кĕске срокра тата тăкаламасăр пухса кĕртме йышăннă. Колхозсемпе совхозсенче механизациленĕ итемсен шучĕ икĕ хут ӳснĕ.

Кăçалхи çул МТС-семпе совхозсем çĕнĕ йышши çĕршер комбайн, дизеллĕ тракторсем тата ытти машинăсем нумай илнĕ. Пуян техника чылай колхозсемпе совхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçе поток йĕркипе туса пыма май парать. Тырпул пухса кĕртес ĕçе тата улăм пуçтарса купалас ĕçе механизацилеме механизаторсемпе колхозсенчи ăста çынсем тракторпа ĕçлемелли волокушăсем, капан хывмалли тата ытти хатĕрсем тунă, çав хатĕрсем колхозниксене йывăр ĕçрен хăтараççĕ тата ĕçе хăвăртрах тума пулăшаççĕ. (ТАСС).

Колхозсенчи ача сачĕсемпе яслисем

ВЛАДИВОСТОК, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Хвалынка ялĕнче партин 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозăн çуллахи вăхăтра ĕçлекен ача ясли уçăлнă. Пĕр пӳлĕмре йĕркипе кроватьсем лараççĕ, вĕсене шурă çивиттисемпе витсе хунă. Тепĕр пӳлĕмĕнче—ачасене валли ятарласа тунă сĕтел-пукан. Килкартинче вылямалли вырăнсем туса панă. Колхозницăсем хăйсен ачисене яслире хăвараççĕ те, хăйсем ĕçленĕ вăхăтра ачасене лайăх пăхнине пĕлсе тăраççĕ.

Спасски районĕнчи ялхуçалăх артелĕсенче пурĕ 12 ача ясли уçнă. Вишневка, Гайворон тата ытти ялсенче ачасене валли çуллахи площадкăсем тунă.

Приморье крайĕнче çуркунне уй-хир ĕçĕсем пуçланнăранпа 150 ача сачĕсемпе яслисем ĕçлеççĕ. Унта 5.000 ача çӳрет. Тырпул пухса кĕртме тытăннă тĕле ача-пăча учрежденийĕсем тата 200 яхăн уçаççĕ.

Çĕрулми икĕ хут пухса кĕртеççĕ

АШХАБАД, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ашхабад районĕнче ир лартнă çĕрулми кăларма тытăннă. Андреев ячĕпе тăракан колхозра çĕрулми кашни гектартан 1.000 пăт ытла тухать. Ялхуçалăх артелĕсем государствăна çĕрулми параççĕ, вăрлăх фончĕ тăваççĕ. Халĕ пухса кĕртнĕ çĕрулмине яровизацилесе тепĕр хут çĕрулми лартма пуçланă. Чылай колхозсенче çĕрулмине машинăсемпе лартаççĕ.

Халĕ лартакан çĕрулми ноябрь уйăхĕ тĕлне ӳссе çитет.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Ячĕшĕн йышăннă решенисем

ЧУРАЧĂК. КПСС райкомĕ кăçалхи май уйăхĕн пуçламăшĕнче «Совет» колхозри пуçламăш парторганизаци ĕçĕсем çинчен сÿтсе явма йышăннă. Парторганизацире партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслеме райком «Совет» колхоза хăйĕн ялхуçалăх пайĕн заведующине Н. Любимов юлташа тата Е. Ананьева инструкторпа Г. Тимофеев пропагандиста янă.

Райком работникĕсем колхозра нумаях вăхăт иртермен, ирхи кÿлĕм пынă та, каç пулас умĕн тухса кайнă. Вĕсем пĕр кун хушшинче колхоз хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсемпе паллашнă, парторганизаци секретарĕ М. Воробьев юлташ хăйĕн ĕçĕсене мĕнле туса пынине тĕрĕслеме ĕлкĕрнĕ.

Майăн 11-мĕшĕнче райком бюровĕн ларăвĕнче М. Воробьев юлташăн отчетне итленĕ. Бюро ку колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци артель хуçалăхне аталантарас ĕçе çителĕксĕр ертсе пынине палăртнă. Уйрăмах кунта общественлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç хуçалăхăн чи кая юлнă участокĕ пулса тăрать.

1952 çулта «Совет» колхозра фермăри кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 715, кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 365 литр çеç сĕт суса илнĕ. Сысна ферми те ÿсмест, кăçал ултă уйăх хушшинче кашни ама пуçне вăтам шутпа 2,2 çăвăр илнĕ. Тухăçлăхĕ мĕнле, тупăшĕ те çапла. 1952 çулта общественлă выльăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăш пурĕ те 13.200 тенкĕ çеç пулнă.

Райком бюровĕ йышăннă 10 пунктран тăракан решенире колхозри пуçламăш парторганизаципе правление пысăк кăтартусем панă. Воробьев юлташăн колхозниксене коммунизмла воспитани парас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла, социализмла ăмăртăва çĕнĕрен чĕртсе ямалла, партилле контроль ĕçне вăйлатмалла, коммунистсен производствăри рольне ÿстермелле т. ыт. те.

Май, июнь уйăхĕсем иртрĕç, июль пуçланчĕ. Райком бюровĕ ятарласа сÿтсе явнă тата пысăк решени йышăннă хыççăн «Совет» колхозри пуçламăш парторганизаци ĕçĕнче те паллă улшăнусем пулассине кĕтмелле. Анчах кунта урăхла пулса тăнă.

Райком хăй йышăннă решение пуçламăш парторганизацине çитерме тата ун çинчен коммунистсене тĕплĕн ăнлантарса пама халиччен те вăхăт тупайман. Бюро ларăвĕ хыççăн иккĕмĕш уйăх çитрĕ пулин те, парторганизаци пухăвне иртерме шутламаççĕ, хăçан иртерессине те паллă мар.

Воробьев юлташ райком бюровĕн решенине пурнăçласси çинчен пуху иртерме райком работникĕсем пырассине кĕтет, анчах халĕ те кĕтсе илеймест.

Воробьев юлташ бюро решенине пурнăçлама тытăнманни çинчен пĕлсен, райком работникĕсем ăна хăйне айăплама та пăхаççĕ. Кунпа килешме те килĕшме çук. Райком панă кăтартусенчен чылайăшне Воробьев юлташ тата колхоз правленийĕ райкомпа райисполком хăйсем пулăшмасăр пурнăçа кĕртме вăй çитерейменççĕ.

«Пуçламăш парторганизаци секретарьне Воробьев юлташа çитес çывăх вăхăтра колхоза малашне аталантармалли тата ăна организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетмелли перспективлă план тума хушас»,— тенĕ райком бюровĕн решенийĕнче.

Паллах ĕнтĕ, ун пек пысăк план тума хутла нумаях вĕренеймен Воробьев юлташăн, çавăн пекех колхоз председателĕн Никитин юлташăн та, пĕлÿ çитмест. Райком ун пек плана чăнах та çырса хатĕрлеттерме шутлать пулсан, чи малтан ку ĕçре колхозри руководительсене парти райкомĕн хăйĕн тата ялхуçалăх специалисчĕсен пулăшмалла. Бюро решенийĕнче пуçламăш парторганизаципе колхоз правленине çавăн пек пулăшу парасси, конкретлă камсем пулăшма тивĕçли çинчен пĕр сăмах та каламан. Чăннипе илсен, ку ыйтăва халĕ пурте манса кайнă.

Решенисем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесси—партилле-организацилле ĕçре чи кирли. Чурачăк райкомĕ «Совет» колхозри руководительсен артель хуçалăхне ертсе пырас ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме решени йышăнчĕ пулсан, ку вăл райкома хăйне те колхозра ĕçсем мĕнле пынине тĕплĕнрех пĕлсе тăма хушать. Бюрора решени йышăннă хыççăн иртнĕ иккĕ уйăх хушшинче колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци ĕçĕнче çĕнĕрен йăнăшсем пулнă, анчах райком вĕсем çинчен пĕлмесĕрех тăрать.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх витисем питĕ юхăнса çитнĕ, ферма работникĕсене тухăçлă ĕçлеме условисем çук. Çĕнĕ витесем тума, киввисене юсама колхозăн вăй çителĕклĕ, запасра тырă та сахал мар.

Воробьев юлташ, колхозра 1952 çулта кашни ĕçкунĕ пуçне 2,5 килограмм тырă валеçнине тата кăçал унтан та нумай пулассине шута илсе, запасри тырра строительство валли расходлама сĕнет.

Правлени составĕнче урăхла шухăшлă çынсем тупăннă. Вĕсемшĕн пулсан—ĕçкунĕ пуçне нумайрах тырă илес, колхозри выльăх-чĕрлĕх тата ăна пăхакан колхозниксем кирек мĕнле пуранччăр. Воробьев юлташăн сĕнĕвне хирĕçлесе, вĕсем запасри тырра халĕ ĕçкунĕ тăрăх валеçме йышăннă.

Колхоз председателĕ Никитин юлташ та çавнашкал çынсем майлă çаврăнса ÿкнĕ. Вăл общественлă выльăх-чĕрлĕх валли витесем тутарма васкамасть, строительство ĕçне халĕ те пикенсе тытăнман-ха.

Воробьев юлташ райкомран пулăшу кĕтет. Анчах райкомпа райисполком «Совет» колхозра общественлă фондри тырра салатма шутланине, выльăхсем каллех юхăннă витесенче юлма пултарассине пĕлмеççĕ.

Колхозри пуçламăш парторганизаци ĕçĕ çинчен решени йышăнса, ăна пурнăçа кĕртме организациллĕ ĕçсем тумасăр хăварни райком ĕçĕн практикинче пĕртенпĕр тĕслĕх мар.

Майăн 11-мĕшĕнче, Воробьев юлташăн отчетне итленĕ ларурах, райком бюровĕ Молотов ячĕпе тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенче агитацилле-массăлла ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явнă.

Бюро ку колхозсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсем Филипповăпа Мефодьева юлташсем агитаторсемпе ĕçлеменнине, социализмла ăмăртăва пуçарса пыманнине тата ытти çитменлĕхсене те палăртнă. Парторганизаци секретарĕсене агитацилле-массăлла ĕçе лайăхлатма çирĕп кăтарту панă, райкомăн пропагандăпа агитаци пайне ку ĕçре вĕсене конкретлă пулăшу пама хушнă. Мĕнле пурнăçланнă-ха çак решени?

— Эпĕ хамăн заместителе Петров юлташа тата Лавров пропагандиста иккĕ колхоза кайса пуçламăш парторганизацисен пухăвĕсене иртерме хушнăччĕ,—терĕ пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Иванов юлташ.—Анчах пухусем иртерни çинчен манра сведенисем çук.

Çапла, сведенисем çук, мĕншĕн тесен Молотов ячĕпе тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенче агитацилле-массăлла ĕçре нимĕнле улшăнусем те пулман.

Райком пуçламăш парторганизацисен ĕçĕ çинчен тăтăшах сÿтсе явать, кашнинчех тивĕçлĕ решенисем йышăнать. Анчах организацилле ĕçпе çирĕплетмен пирки çав решенисенчен чылайăшĕ хут çинче тăрса юлать.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Çур çулхи плана ирттерсе тултарнă

УЛАТĂР. Çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçлесе, предприятисен коллективĕсем чылай çитĕнÿ турĕç. Хулари промышленность продукци туса кăлармалли çур çулхи плана 103,1 процент тултарчĕ.

Арман комбиначĕ çур çулхи планран иртерсе 20 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Çăкăр комбиначĕ плана 113,5 процент тултарчĕ.

Атă-пушмак фабрики плана тултарас тĕлĕшпе чылайранпа юлса пыратчĕ. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисемпе тата И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕпе хавхаланса, фабрика коллективĕ ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕ, производствăри резервсемпе туллинрех усă курма тытăнчĕ. Çавна пула фабрика продукци туса кăлармалли плана иртерсе тултарчĕ.

Пăравуссем юсакан заводра, йывăç япаласем тăвакан мастерскойра тата чугун çул техникумĕнчи мастерскойра ĕçлекенсем Чугун çул работникĕсен кунне çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем çур çулхи производство планне ăнăçлă тултарчĕç, çак уйăхри плана иртерсе тултарассишĕн ăмăртаççĕ.

Вырăнти промышленноçпа топливо промышленность министерствине пăхăнса тăракан вăрманпромхоз коллективĕ планран иртерсе йывăç тата вутă хатĕрлерĕ, катка-пичке, йывăç кĕреçе чылай туса кăларчĕ. Вăрманпромхозри торфяниксем сезонти плана срокчен тултарассишĕн ăмăртаççĕ. Кузьмин бригадир, Мельников техник тата Мураткин машинист тăрăшнипе машинăпа торф кăларакан бригада 22 пин торф кирпĕчĕ вырăнне сменăра 27—30 пин кирпĕч кăларать.

Н. АННЕНКОВ.

Рабочисен культури ÿсет

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод территорийĕнче рабочисем хăйсем лартса ÿстернĕ парк пур. Кунта фонтан тунă. Ун тавра симĕс, кăвак, хĕрлĕ чечексем çиçсе лараççĕ. Çуллахи вăхăтра рабочисем, апат вăхăтĕнче, пурте тенĕ пекех паркра канаççĕ. Хăшпĕрисем доминолла, шашкăлла, шахматла выляççĕ. Хуткупăс выляни, юрă юрлани, ала çупса ташлани завод тулашĕнченех илтĕнет.

Завод поселокĕнче клуб, радиоузел, шкулсем, почта, библиотека, типографи тата ыттисем те пур. Библиотекăра 12 пин ытла тĕрлĕрен кĕнеке. Куллен 17 тĕслĕ хаçат-журналсем 36 экземпляр килсе тăраççĕ. Цехран цеха куçса çÿрекен ултă библиотека тунă. Библиотекăран кĕнекесем илсе вулакансен хисепĕ 1.600 çынтан иртет. Герасимов слесарь кăçал 45 кĕнеке илсе вуланă. Вăл производствăра паха тĕслĕхсем кăтартать, 1956 çул шучĕпе ĕçлет. 67 çулхи Бухтулов юлташ 19 кĕнеке илсе вуланă. Вăл истори кĕнекисемпе Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен çырнă кĕнекесем ытларах илсе вулать. Библиотекăра вулакансен конференцийĕсем час-часах пулаççĕ.

Кашни çулах Кĕçĕн Çавал хĕрринче пионер лагерĕ уçаççĕ. Унта çулсерен 540 ача хăйсен сывлăхне çирĕплетеççĕ. Завод çумĕнчи поликлиникăра 19 врач, 26 фельдшер тата медсестра ĕçлет. Кунта рентген, хирурги, шăл сыватмалли, куç чирĕнчен сыватмалли тата ытти кабинетсем, лаборатори, хĕрарăмсемпе ача-пăча консультацийĕ тата ыттисем те пур. Вуншар рабочисем çулсерен курортра, канмалли çуртра канаççĕ.

И. ЖУРАВЛЕВ.

Хаçатсем çинчен вулакансем мĕн калаççĕ

Массăсемпе çыхăну тытассине вăйлатмалла

КПСС Хĕрлĕ Чутай райкомĕпе ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕн «Сĕнтерÿ çулĕ» ятлă хаçатне районти ĕçсыннисем юратса вулаççĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕ совет халăхĕ умне лартнă задачăсене пурнăçлас ĕçре хаçат пысăк вырăн йышăнать.

«Сĕнтерÿ çулĕ» хаçат пирĕн МТС-ри механизаторсен ĕç дисциплинине çирĕплетме нумай пулăшрĕ. Ĕç дисциплинине юсанă хыççăн МТС ĕçĕсем те лайăхланчĕç.

Сураки вăхăтĕнче 4-мĕш трактор бригадинчи трактористсем Калинин ячĕпе тăракан колхозра хăйсен ĕçĕсене анах тунă, кĕрхи сĕртме пулнă вырăнта культиваци тумасăрах акса хăварнă. 3-мĕш трактор бригадинчи трактористсем уйри ака-суха ĕçне хăвăртлатас вырăнне тракторсемпе колхозниксен кил вырăнĕсене сухалама пуçланă. Машина-трактор станцийĕн агрономĕ А. Алексеева юлташ ответлă пулнă пирки «Путь Ленина» колхозра пăрса вăрлăхне нормăран ытлашши акнă, колхоза 90 пăта яхăн сăтăр тунă. Çаксем çинчен хаçатра çырнă пулнă. Çавăн пекех МТС директорĕ А. Шорников юлташ хăйĕн выльăхĕсене МТС садне ярса çĕмĕрттерни, хăшпĕр механизаторсем ĕç вăхăтĕнче ĕçсе çÿрени çинчен те районти хаçатра критикăлла çырусем пулчĕç.

Машина-трактор станцийĕн дирекцийĕпе пуçламăш парторганизаци хаçат критикленинчен вăхăтра тивĕçлĕ выводсем турĕç, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерчĕç.

Маленков ячĕпе тăракан колхозра колхоз кадрĕсене час-часах улăштарни çинчен çырнă пулнă. Колхоз правленийĕпе парторганизаци хаçатра пичетленнĕ çырăва сÿтсе явнă, çитменлĕхсене пĕтернĕ.

«Сĕнтерÿ çулĕ» хаçат ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне сарма пулăшать. Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Самылкин, Андреев ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадин бригадирĕ А. Мадебейкин, «Правда» колхозри аслă конюх Л. Молодейкин, аслă зоотехник Г. Сулимкин, агроном А. Михайлова, трактор бригадин бригадирĕ М. Таланцева тата ытти юлташсем те хаçата çырса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен опычĕсемпе паллаштараççĕ, ĕçри çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене кăтартса параççĕ.

Анчах район руководителĕсем—райисполком председателĕ И. Осипов юлташ, парти райкомĕн секретарĕсем А. Филиппов, П. Ермолаев юлташсем, районти прокурор П. Чернов юлташ хаçата пачах çырмаççĕ-ха. Ку ĕнтĕ хаçат редакторĕ М. Назаров юлташ партипе совет активне, чи малтан руководительсене, хаçат ĕçне хутшăнтарма тăрăшманнине пĕлтерет. Çавăн пекех хаçата колхозсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсем, ял Совет председателĕсем питĕ те сахал çыраççĕ. Кăçалхи 6 уйăх хушшинче хаçат вулакансене пĕр депутат ĕçĕпе те паллаштармарĕ. Суйлавçăсем иртнĕ суйлав вăхăтĕнче ял Совечĕсене тата вĕсен депутачĕсене тырпул тухăçлăхне ÿстерес, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерсе пырас ĕçе пуçарса пыма, çак енĕпе шалти резервсемпе анлăн усă курассишĕн кĕрешÿ пуçарма хушса хăварчĕç. Хаçат суйлавçăсен çак наказĕсемпе сĕнĕвĕсене пурнăçлас ĕçри чăнчăн организатор пулса тăраймарĕ-ха.

Районти хаçат рабочисемпе колхозниксен хаçачĕ—халăх масси хаçачĕ пулма тивĕçлĕ. «Унăн колхозниксен, МТС-ри работникĕсен, предприятисенче ĕçлекенсен, ялти интеллигенцин трибуни пулса тăмалла, район пурнăçне пур енчен те тĕплĕн çутатмалла»,—терĕç «КПСС Чăваш обкомĕн IV-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен» КПСС райкомĕн пленумĕнче сÿтсе явнă чухне.

Паллах «Сĕнтерÿ çулĕ» хаçат пленумра палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес енĕпе ĕçлеме пуçларĕ, аялтан килекен критикăпа самокритикăна аталантарас тĕлĕшпе малтанхи утăм турĕ. Редакцие ĕçсыннисен çырăвĕсем нумайрах килсе тăма пуçларĕç, корреспондентсен активĕ йышланчĕ, çавăнпа та хаçат район пурнăçне, уйрăмах ялхуçалăхĕпе культура ыйтăвĕсене ытларах та тарăнрах çутатма пуçларĕ.

Критикăлла материалсем пичетлет пулин те районти хаçат вĕсен витĕмлĕхĕшĕн тăрăшмасть. Хăшпĕр организацисемпе учрежденисем хаçат çинчи критикăлла çырусем тăрăх нимĕнле мера та йышăнмаççĕ, çакна пула хаçатăн авторитечĕ ÿсеймест. Акă, хаçатра февралĕн 19-мĕшĕнче «Амăшĕ кĕтет», мартăн 29-мĕшĕнче «Кино килчĕ», апрелĕн 5-мĕшĕнче «Важоров хÿтттинче», апрелĕн 26-мĕшĕнче «Кăшлакансем», апрелĕн 19-мĕшĕнче «Госбанкăн уйрамĕн кантурĕнче йĕркелĕх çук», июнĕн 21-мĕшĕнче «Кĕреçе тырри виçесĕр илеççĕ» ятлă критикăлла çырусем тухрĕç. Çак çырусенче асăннă организацисемпе учрежденисенче халĕ те малтанхи çитменлĕхсем пур, вĕсене пĕтерессишĕн нимĕн чухлĕ те кĕрешмеççĕ.

Çак асăннă çитменлĕхсене хăвартрах пĕтерсен «Сĕнтерÿ çулĕ» хаçата рабочисемпе колхозниксем татах та юратса вулĕç.

Критикăлла материалсен витĕмлĕхĕшĕн кĕрешессине вăйлатмалла, ĕçсынни массисемпе тачă çыхăну тытмалла.

С. ИЛЬИН,
Машина-трактор станцийĕнчи партбюро секретарĕ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„Юлса пынине пĕтерес пулать"

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра июнĕн 23-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Юлса пынине пĕтерес пулать» ятлă статьяна Советски район Совет исполкомĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă. Исполком статьяра фактсене тĕрĕс кăтартса панине палăртнă, ял Совет исполкомĕсен председателĕсемпе колхоз председателĕсене çул-йĕр строительстви планне (ĕçсыннисем хутшăннипе тултармалли плана) июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарса çитермелле тума хушнă.

Район Совечĕн исполкомĕ колхоз председателĕсене правительство йышăннă постановление тĕрĕс пурнăçа кĕртмелли çинчен асаутарнă, районти организацисемпе учрежденисен тата предприятисен руководителĕсене хăйсен транспорчĕпе çул-йĕр строительстви материалĕ турттарма хушнă.

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ ПРОМЫШЛЕННОÇНЕ МАЛАЛЛА АТАЛАНТАРАССИШĔН

Совет çыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерессе вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ йĕркеллĕ ĕçленинчен те сахал мар килет. Халĕ, партипе правительство халăхăн пурнăçпа йăла тата культура условийĕсен шайне хăпартмалли анлă программăна пурнăçласа пынă вăхăтра, промысла кооперацийĕнче ĕçлекенсен ответлăхĕ уйрăмах ÿсет.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ вырăнти промышленноçпа промысла кооперации предприятийĕсенче куллен кирлĕ таварсем, килте тата хуçалăхра усă курмалли япаласем, вырăнти строительство материалĕсем туса кăларассине чылай сарма, таварсен ассортиментне нумайлатма, продукци пахалăхне лайăхлатма палăртрĕ. Республикăри промартельсенче съезд решенийĕсене чыслă пурнăçлассишĕн социализмла ăмăрту анлă саралчĕ.

Канашри «Дружба» промартель продукци туса кăларассине çулсерен ÿстерет, ĕçсыннисене çĕнĕрен те çĕнĕ япаласем туянтарать. Производствăри шалти резервсемпе туллин усă курса, кашни ĕçлекен валли паха майсем туса парса, социализмла ăмăртăва анлă сарса, артель çур çулхи производство планне срокчен тултарчĕ, планран иртерсе 1.740 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Чăваштарпромсоюза пăхăнса тăракан Шоркăри Чапаев ячĕпе тăракан промартель производство планне тăтăшах иртерсе тултарать, пĕрремĕш сорт продукци çеç туса кăларать. Пĕрремĕш кварталта ĕçре уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çак артеле хăйĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕ. Халĕ артель коллективĕ август уйăхĕ шучĕпе продукци туса кăларать.

«Паха тĕрĕ», «Портной», Вăрнарти «Трудовик», Шĕнерти «20 лет Чувашии» промартельсем хăйсен тивĕçне пĕрмаях чыслă пурнăçласа пыраççĕ.

Чăвашпромсовет çур çулхи плана срокчен тултарчĕ, планран иртерсе 2,6 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Нумай промартельсем июнь уйăхĕнче лайăх ĕçленине палăртас пулать. Продукци туса кăлармалли уйăхри плана пĕтĕмпе 107,7 процент тултарни çавна пĕлтерет те ĕнтĕ.

Кашни промартельте малта пыракансем, производство новаторĕсем пур. Стахановецсен хисепĕ куллен ÿсет. Вуншар бригадăна пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада ятне панă. Горький ячĕпе тăракан артель пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан артель ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе уйрăмах пысăк çитĕнÿ тунă 13 çынна диплом памалла турĕ. Вĕсем шутне тĕрĕ тĕрлекенсем Гаврилова, Скворцова юлташсем, çĕвĕç-закройщицăсем Лебедева, Гроболелова, сĕтел-пукан авса тăвакансем Петровпа Осипов юлташсем кĕреççĕ. Пĕрремĕш тата иккĕмĕш категорири мастер-çĕвĕç, мастер-закройщик ятне 36 çын илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Нумаях пулмасть промартельсем туса кăларакан япаласен смотрĕ пулса иртрĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ ятарласа уйăрнă комисси тата суту-илÿ организацийĕсем «Паха тĕрĕ», Ширшов ячĕпе тăракан, Хĕтаккасинчи «Лесоруб», «1-ое Мая», «Дружба», «Крестьянский кузнец» промартельсем паха продукци туса кăларнине палăртрĕç.

Промартельсен куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Республикăра чĕртавар, ĕç вăйĕ çителĕклĕ, оборудовани те сахал мар. Государство промкооперацине пысăк пулăшу парать. Çав паха майсемпе пĕлсе усă курни, руководительсем пуçарулла пулни, пысăк предприятисен, производство новаторĕсен паха опычĕпе анлă усă курни çеç кирлĕ.

Промысла кооперацийĕнче усă курман резервсем нумай. Çапла калани тĕрĕссине кăтартса пама пĕр-ик тĕслĕх çеç илĕпĕр. Древпромсоюза пăхăнса тăракан промартельсем пурте вырăнти чĕртавартан—йывăçран продукци туса кăлараççĕ. Вĕсен оборудовани ытлашшипех пур. Апла пулин те Древпромсоюз (председателĕ А. Степанов юлташ) кăçалхи çур çулта планпа палăртнинчен 1,8 миллион тенкĕлĕх продукци сахалтарах туса кăларчĕ. Иртнĕ уйăхра Тарпромсоюз (председателĕ Ф. Климов юлташ) продукци туса кăлармалли плана 85 процент çеç тултарчĕ. 152 промартельтен 59 промартель, урăхла каласан, 39 проценчĕ çур çулхи плана тултарман. Май уйăхĕнче Коопинсоюза пăхăнса тăракан артельсенчен виççĕмĕш пайĕ çеç плана тултарнă. Юлса пыракан артельсем хăйсен тивĕçне пурнăçламаннипе ĕçсыннисем миллионшар тенкĕлĕх тавар туянайман.

Шалти резервсем нумаййине тата çакăнтан лайăх курма пулать. Швейпромсоюза пăхăнса тăракан промартельсенче ĕçлекенсенчен 48 проценчĕ ĕç нормине тултармасть. Древпромсоюзпа Промсоюза пăхăнса тăракан промартельсенче те ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Çакă вăл асăннă союзсен тата промартельсен руководителĕсем работниксен ăсталăхне ÿстерме, малта пыракансен опытне сарма, оборудование тăтти-сыпписĕр ĕçлеттерме тăрăшманнинчен килет. План тăрăх иккĕмĕш кварталта производствăлла-техникăлла курссенче 420 çынна вĕрентме палăртнă. Чăннипе вуншар çынна çеç вĕрентнĕ, стахановла шкулсем организацилемен. Промсоюзсем работниксен ăсталăхне ÿстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, çак ыйтăва хăйсен ларăвĕсенче сÿтсе явмаççĕ.

Нумай промартельсен руководителĕсем плана çирĕплетнĕ изделисем тăрăх тултарма, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тулли тивĕçтерме тăрăшмаççĕ. Государство çирĕплетсе панă план тăрăх промартельсен чи кирлĕ япаласем 28 туса кăлармалла. Пилĕк уйăх хушшинче плана 14 изделиенĕпе çеç тултарнă. Уйрăмах кирпĕч, известь, урапа-çуна, сĕтел-пукан туса кăларас ĕç юлса пынине палăртас пулать. Пилĕк уйăх хушшинче промартельсем ĕçсыннисемпе колхозсене 593 пин тенкĕлĕх сĕтел-пукан, урапа парса çитереймен. План тăрăх Промсоюзăн кăçал 150 тонна цинкпа витнĕ тимĕр савăт-сапа туса кăлармалла. Тимĕр, материалсем кÿрсе килнĕ, анчах Промсоюз руководителĕсем (председателĕ Федоров юлташ) çаврăнăçусăр пулнипе, асăннă йышши савăт-сапа туса кăларма тытăнман та.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче тунă отчетлă докладра Г. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Строительство материалĕсем тата промышленноçăн ытти япалисем пирки калас пулсан, пирĕн государство промышленноçĕпе промысла кооперацийĕ колхозсемпе совхозсене çав материалсене çителĕклĕ тата йÿнĕрех хакпа парса тăма пултараççĕ тата вĕсем çакна тума тивĕçлĕ те». Съезд решенийĕсене пурнăçласси — промартельсен чыслă тивĕçĕ.

Промартельсем кирпĕч тума кирлĕ оборудовани тата механизмсем чылай туянчĕç. Апла пулин те вĕсем плана тултармаççĕ. Кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче ĕçсыннисемпе колхозсене 205 пин кирпĕч парса çитереймен. Промсоюз кирпĕч тумалли плана çулсерен тултармасть, çакăнтан унăн руководителĕсен тивĕçлĕ вывод тумалла. Хăвăрт аталанса пыракан халăх хуçалăхне тата ĕçсыннисене строительство материалĕсем нумай кирлине промкооперации работникĕсен асра тытмалла. Строительство материалĕсем туса кăларасси юлса пынине кĕске вăхăтра пĕтерес пулать. Промсоюзăн кирпĕч типĕтмелли сарайсем тума, йывăр ĕçе механизацилеме уйăрса панă укçа-тенкĕпе туллин усă курмалла, промартельсене кирпĕч производствине йĕркелеме ытларах пулăшмалла.

Промкооперации ĕçĕнчи чи пысăк çитменлĕх вăл—нумай япаласен пахалăхĕ начарри. Смотр вăхăтĕнче чылай артельсем япăх продукци туса кăларни палăрчĕ. Уйрăмах Коопинсоюза пăхăнса тăракан артельсенче технологи процесне тăтăшах пăснине палăртас пулать. Чылай артельсенче япаласене сортламаççĕ, марка лартмаççĕ. Канашри «Красный воин» артель çĕлесе кăларакан тапочкăсен кĕллисем усăнса тăраççĕ. Кунта атăсене сăмала сĕрмен çиппе çĕлеççĕ. Коопинсоюз президиумĕ (председателĕ М. Мальцев юлташ) япăх продукци туса кăларнипе килĕшсе тăрать, артельсене техникăлла пулăшу памасть, стандартсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемест. Çак çитменлĕхе Мальцев юлташăн хăвăртрах пĕтермелле. Çавăн пек çитменлĕхсем ытти промсоюзсенче те пур.

Государство предприятийĕсем халăха куллен кирлĕ таварсем нумай туса кăлараççĕ. Ĕçсыннисем лайăхрах, илемлĕрех, йÿнĕрех тавар туянасшăн. Паха мар таварсем никама та кирлĕ мар. Брак туса кăларни çĕршыва пысăк сиен кÿрет, мĕншĕн тесен чĕртавар, ĕç вăйĕ сая каять. Çакна промартельсенче ĕçлекенсен пĕр самантлăха та манма юрамасть.

Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешменни мĕн тери пысăк сиен кÿнине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Шупашкар районĕнчи Тĕкĕрç Иçейри, Етĕрне районĕнчи Пĕрремĕш Ирçери, Сĕнтĕр районĕнчи Шатракассинчи промартельсем стандартлă мар япаласем туса кăларнипе нумай убыток тÿснĕ. Кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне артельсенче 11,6 миллион тенкĕлĕх, вăл шутра нормативран ытлашши 4,5 миллион тенкĕлĕх тавар пулнă. Сĕнтĕр районĕнчи Матикассинчи артельте, Октябрьски районĕнчи «Большевик» артельте, Кувакинăри инвалидсен артелĕнче кайман таварсем вуншар пин тенкĕлĕх усăсăр выртаççĕ. Пĕрремĕш кварталта 22 промартель убыток илни пуринчен ытла паха мар продукци туса кăларнинчен килнĕ. Япăх продукци туса кăлармалла мар. Промартельсенче государство стандарчĕсемпе анлă усă курмалла, пысăк пахалăхлă продукци çеç туса кăларакан бригадăсем организацилемелле, кадрсен техникăлла пĕлĕвне тăтăшах ÿстерсе пымалла, мастерсен, техникăлла контроль пайĕсенче ĕçлекенсен, техноруксен ответлăхне хăпартмалла.

Ĕçсыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессе—промысла кооперацийĕн пысăк тивĕçĕ. Чылай промартельсен тата промсоюзсен руководителĕсем атă-пушмак, тумтир, савăт-сапа юсас ĕçе хакламаççĕ, мастерскойсемпе павильонсен ĕçне йĕркелеме тăрăшмаççĕ. Нумай çĕрте çĕвĕ çĕлекен машинăсене, велосипедсене, музыка инструменчĕсене, сĕтел-пукана юсас ĕçе йĕркелемен. Мастерскойсенче пысăк çитменлĕхсем пурри, заказсене вăхăтра пурнăçламанни, япаласене япăх юсани ĕçсыннисене кÿрентерет.

Асăннă çитменлĕхсем ертсе пыракан нумай работниксем партипе государство дисциплинине пăснинчен, ответлăха туйманнинчен, партипе правительство решенийĕсем çине формально пăхнинчен килеççĕ. Промысла кооперации работникĕсен партипе государство умĕнчи ответлăха ÿстермелле, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерессишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешмелле.

Нумаях пулмасть промысла кооперацийĕ, вăрман промысла кооперацийĕ тата инвалидсен кооперацийĕ пĕрлешрĕç. Халĕ Чăвашпромсовет 12.470 çынна пĕрлештерсе тăрать. Кăçалхи план тăрăх унăн 156 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла. Халиччен тĕрлĕ системăсене кĕнĕ артельсене пĕрлештерни шалти резервсемпе, техникăпа туллинрех усă курма, производствăна специализацилеме, йывăр ĕçе ытларах механизацилеме, çапла вара паха продукци нумайрах туса кăларма, унăн хăйне ларакан хакне йÿнетме пулăшĕ.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе промартельсенче ĕçлекенсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн вăя шеллемесĕр кĕрешĕç.

Я. МАКЛАШКИН,
Чăвашпромсовет правленийĕн председателĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат ытларах хатĕрлĕр!

Выльăх апачĕ хатĕрлессине вăйлатмалла

(Редакцие килнĕ çырусене пăхса тухни)

Колхозсенчи обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕ тата унăн тухăçлăхĕ çултан-çул ӳсе пырать. Йышлă выльăх усраса колхозсем хăйсен тупăшне ӳстереççĕ, артель хуçалăхне тĕреклетсе пыма пулăшаççĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хуни пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа республикăри нумай колхозсем выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç çине тимлĕ пăхаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕхшĕн хытă тăрăшни, вĕсем валли силос хывни, утă хатĕрлени çинчен çырнă çырусем редакцие нумай килсе тăраççĕ.

—«Новая жизнь» колхоз утă çулма кăçал районта чи малтан тытăнчĕ. Клевера çулса пустарнă, халĕ çаран утти çулаççĕ. Паянхи куна колхоз 50 тонна силос хывса хăварнă,—тесе пĕлтерет Йĕпреç районĕнчен Г. Римкас юлташ.

Н. Ратьковский корреспондент çапла çырать:

— Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстерессишĕн пыракан социализмла ăмăртура чылай çитĕнӳсем турĕ. Кăçалхи ултă уйăх хушшинче Н. Бурлакова доярка хăй пăхакан кашни ĕнерен 1.392 литр, К. Ситухина—1.287 литр, Н. Кузина—1.280 литр, Н. Ерошина доярка 1.278 литр сĕт суса илнĕ. Çак çитĕнӳсем колхоз ĕнесене зоотехника кăтартăвĕсем тăрăх пăхнинчен, çителĕклĕ таран выльăх апачĕ хатĕрлесе хăварнинчен килнĕ. Кăçал та колхоз ĕнесем валли клевер тата улăх утти нумай хатĕрлет. Кашни ĕне валли 5-шер тонна силос хывса хăвараççĕ.

Кăçал ĕнесем валли кирпĕчрен иккĕмĕш вите туса пĕтереççĕ. Витери ĕçсене пĕтĕмпех механизацилеççĕ.

Ку районти Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчен Г. Романов ялкор пĕлтернĕ тăрăх, колхозра утă çулма 30 çын уйăрнă. Вĕсене С. Григорьев коммунист ертсе пырать. Виçĕ кун хушшинче 50 гектар утă çулнă. Колхозра 50 тонна силос хывнă. Силос хывнă çĕрте МТС агрегачĕ ĕçлет. Колхозниксем тырă вырма тухиччен силос хывмалли плана 80 процентран кая мар тултарма сăмах панă.

Выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхни çинчен, 150 тонна силос вырнаçмалăх 2 силос башни туни çинчен Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозран А. Железов юлташ çырса пĕлтерет.

— Пирĕн выльăхсем, иртнĕ çулсенчи пекех, таса та çутă витесенче хĕл каçĕç. Вĕсем валли çĕтеклĕ апат çителĕклĕ пулать. Доярккăсем кăçал кашни сăвакан ĕнерен 2.000 литртан кая мар сĕт суса илме пулнă,—тесе çырать вăл.

Анчах çаран курăкĕсене, акнă курăксене çулас, силос хывас ĕçре республикăри колхозсенче пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем утă, курăксем çулас, силос хывас ĕçе хакламаççĕ. Вĕсем «вăхăт пур, ĕлкĕрĕпĕр, çуллахи ăшă кунсем иртмен вĕтха», тесе лăпланса лараççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Советски районĕ кая юлса пырать.

Ку вăл мĕнрен килет-ха? Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе хакламаççĕ, ĕçсыннисен анлă массине çак ĕçе тума мобилизацилемеççĕ.

Выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе Калинино районĕ те юлса пырать. Районти 33 колхозран 23 колхозра кăна выльăх апачĕ акса тумалли пусă çаврăнăшне йĕркеленĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадăсене 18 колхозра кăна тунă. Районти чи пысăк колхозсенчен пĕрин — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн утă тума çулмалли нумай çул ӳсекен курăксем пачах çук. Шверник ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан колхозсенче те утă тумалли курăксем питĕ сахал. «Новый путь», «Гвардеец», Маленков ячĕпе тăракан колхозсенче нумай гектар çинчен утă тата акнă курăксем пухса кĕртмелле. Анчах çак колхозсенче халĕ те утă çулма тытăнман. Районти колхозсен 5.200 тонна силос хывмалла, паянхи кун тĕлне вара 500 тоннăна яхăн кăна силос хывнă. Ку тĕлĕшпе МТС та сахал пулăшать. 8 силосорезкăран иккĕшĕ юсавлă мар.

Çак фактсем обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕç çине чылай çĕрте чунсăррăн пăхни çинчен калаççĕ.

Тырă вырма тытăниччен шутлă кунсем юлчĕç. Ун чухне колхозниксен тата механизаторсен пысăк пайĕ тырпул пухса кĕртес ĕçе хутшăнать. Çавăнпа та халĕ кашни кунпа тата кашни сехетпе утă çулнă, силос хывнă çĕрте усă курмалла. Çак ĕçе кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса иртересси—колхоз руководителĕсен, партипе совет работникĕсен пирвайхи тивĕçĕ.

Мушарта лăпкă-ха

КУСЛАВККА. Мушарти Сталин ячĕпе тăракан колхозăн уй-хирĕсенче вăйлă тырпул çитĕнет.

Анчах та çак тырпула пухса кĕртме колхоз епле хатĕрленет-ха? Ку ыйту çине колхоз председателĕ Ф. Петров юлташ пĕр именмесĕрех çапла ответ парать:

— Тырпулсене пухса кĕртиччен вăхăт нумай-ха, ĕлкĕрĕпĕр. Ăçта ытлашши васкамалла?

Хамăр ĕлкĕреймесен МТС пулăшĕ...

Колхозра пурĕ 6 витнĕ итем. Вĕсем пĕри те юсавлă мар. Тăррисене кĕркуннех çил сӳсе антарнă, каштисемпе юписем те çитмеççĕ. Кун пек итемсенче йĕпе-сапа çанталăкра авăн çапасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть.

Государствăна тырă панă чухне ĕçлеме транспорт бригади халиччен те йĕркелемен. Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте, комбайнсемпе пĕрлех, жнейкăсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Колхозăн жнейкăсем пачах та çителĕксĕр. Пуррисем те юсавлă мар. Вĕсене юсасси çинчен шухăшламаççĕ те. Çурласене шăллаттарман.

— Тимĕрçĕ ĕлкĕреймест,—теççĕ колхоз руководителĕсем.

Тырă хумалли кĕлетсем те хатĕр мар, вĕсене дезинфекцилемен, тăррисене витмен.

Цĕр сăмахпа каласан, колхоз тырпул пухса кĕртме питĕ япăх хатĕрленет. Ку тĕлĕшпе колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ М. Манюков юлташ та пуçарулăх кăтартмасть. **И. ИЛЬИН.**

Хĕле хатĕрленес ĕçе хăвăртлатмалла

КАНАШ. Иртнĕ çулсенчи опытран çакă курăнать: хĕле вăхăтра тата лайăх хатĕрленсе çитсен предприятисемпе чугун çул организацийĕсем сивĕ çанталăкра та пĕр тикĕс, тухăçлă ĕçлеме пултараççĕ. Хулари чылай предприятисем 1952 çулхи тăваттăмĕш тата кăçалхи пĕрремĕш кварталсенчи плана ăнăçлă тултарчĕç. Производство çурчĕсене, оборудование пысăк пахалăхпа юсани, чĕртаварпа топливо запасĕсем туни, кадрсем вĕрентсе хатĕрлени, рабочисем валли ĕçлеме тата пурăнма лайăх условисем туса пани предприятисемпе чугун çул организацийĕсене ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсемпе чăрмавсене хăвăрт пĕтерсе пыма пулăшрĕç.

Аш-какай комбиначĕ, хулари промкомбинат, «Дружба» тата «Швейник» промартельсем хĕллехи уйăхсенче производство планне чылай иртерсе тултарчĕç, чĕртаварпа топливо нормăран иртерсе расходламарĕç.

Чугун çул транспорчĕ умĕнче уйрăмах ответлă задачăсем тăраççĕ. Иртнĕ хĕлле узелти чылай чугун çул организацийĕсем йĕркеллĕ ĕçлерĕç, поездсене расписани тăрăх çӳреттерессишĕн кĕрешрĕç. Иртнĕ çулхи паха опытпа çитменлĕхсене шута илсе, узелти партком çитес хĕле хатĕрленме план турĕ, организацилле чылай ĕçсем туса иртерчĕ. Иртнĕ уйăхра хуçалăх тата парти руководителĕсен канашлăвĕ пулчĕ. Унта пăравуссене, çуртсене, çула юсас, кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ыйтусене тĕплĕн сӳтсе ярĕç, паха сĕнӳсем чылай пачĕç, çитменлĕхсене хăюллăн палăртрĕç.

Узелти чугун çул организацисем чылай ĕç туса иртерчĕç. Пăравус деповĕнче производство çуртне юсаççĕ, çĕр кăмрăк тиесе пушатакан хăшпĕр крансене юсаса çитернĕ. Вокзал çуртне тата стрелкăсене юсаса тирпейлеççĕ. Дистанцири рабочисем казармăсем тăваççĕ, çулсемпе кĕперсене юсаççĕ.

Узелти службăсенче пуринче те работниксем техника ыйтăвĕсем тăрăх экзамен параççĕ.

Вагонсем юсакан заводра цехсене хĕллехи вăхăтра татти-сыпписĕр ĕçлеттерме пулăшакан мероприятисен планне çирĕплетнĕ, çав плана цехсене çитернĕ, чылай станоксене юсама тытăннă. Анчах заводри партком цехсен руководителĕсем асăннă плана мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемест, çак ыйтăва хăйĕн ларăвĕсенче сӳтсе явмасть. Завод территорийĕнчи çулсене, хăшпĕр оборудование юсама тытăнман, производство çурчĕсене тирпейлесе çитермен, кантăксем чылайăшĕ ваннă. Чылай цехсенче душсем юсавлă мар, вентиляторсене, пăс пăрăхĕсемпе радиаторсене юсас ĕç те вăраха кайнă. Юр тасатакан машинăсене, çул çине юр çуса тултарасран хӳтĕлекен щитсене вăхăтра тирпейлесе хумасан транспорт цехĕ сивĕ, тăманлă çанталăкра йĕркеллĕ ĕçлеме пултарайманнине завод руководителĕсем пĕлеççĕ. Апла пулин те çав хатĕрсене юсаттарма васкамаççĕ.

Ытти предприятисенче те çитменлĕхсем нумай. Çăкăр завочĕ топливо кӳрсе килме тытăнман, оборудование юсас ĕçе те йĕркелемен.

Ансăр чугун çул юписем юсавлă пулманнипе иртнĕ хĕлле элеваторпа СССР Çул-йĕр министерствин строительствăпа монтаж кантурĕн ĕçĕнче пысăк чăрмавсем пулчĕç. Элеваторпа кантур руководителĕсем сивĕ çанталăк пуласса кĕтни туйăнмасть.

Ĕçсыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатасси пурăнмалли çуртсем çĕнĕрен тумалли тата киввисене юсамалли плана тăтăшах тултарса пынинчен килнине пурте пĕлеççĕ. Апла пулин те хула Совет исполкомĕн тата вагонсем юсакан заводăн коммунальнăй хуçалăх пайĕсем çуртсене юсама уйăрса панă укçа-тенкĕпе вăхăтра усă курма, çуртсене пысăк пахалăхпа юсаттарма тăрăшмаççĕ. Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе специалистсем пурăнакан социализмла хулари нумай хваттерлĕ çурта юсама çур миллион тенке яхăн укçа уйăрса панă. Анчах коммунальнăй хуçалăх пайĕ строительство ĕçĕсен проектне туса хатĕрлеменнипе çурта юсама тытăнаймаççĕ.

Предприятисем, чугун çул организацийĕсем хĕлĕн-çăвĕн пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлесси, технологи дисциплинине çирĕп тытса пырасси кадрсем пуçарулла, техникăна лайăх пĕлнинчен нумай килет. Пуян опыт туяннă, техникăна алла илнĕ кадрсем ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсемпе чăрмавсене пĕтерме хăнăхнă, вĕсем çĕнĕрен те çĕнĕ, тухăçлăрах мелсем шухăшласа кăлараççĕ, малта пыракансен опычĕпе анлă усă кураççĕ. Çуллахи вăхăтра хулари чылай предприятисенче рабочисене техникăна вĕрентес ĕçе вăйсăрлатни, техникăлла кабинетсем тата библиотекăсем япăхрах ĕçлеме тытăнни хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тата вĕсен квалификацине ӳстерсе пырас ĕçе кирлĕ пек хакламаннине çеç пĕлтерет. Уйрăмах ялхуçалăх машинисем юсакан заводра, СССР Çул-йĕр министерствине пăхăнса тăракан строительствăпа монтаж кантурĕнче кадрсен тавракурăмне тата ăсталăхне ӳстерме тăрăшманнине палăртас пулать. Унти парторганизацисемпе хуçалăх руководителĕсем техникăна вĕрентекен курссемпе кружоксен ĕçĕпе интересленмеççĕ, производство новаторĕсен опычĕпе меслетне, наукăпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене сарма тăрăшмаççĕ.

Хĕл çитесси нумай юлмарĕ. Çуллахи çанталăкра çĕнĕ çуртсем лартма, киввисене юсама, топливо кӳрсе килме, чĕртавар запасĕсем туса хума хĕллехинчен çăмăлрах та, йӳнĕрех те. Кашни предприятин, стройкăн, чугун çул организацийĕн хальхи кашни кунпа лайăх усă курма тăрăшмалла.

КПСС хула комитечĕ предприятисемпе чугун çул организацийĕсем хĕле мĕнле хатĕрленнипе куллен интересленет, ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме, самокритикăпа аялтан килекен критикăна сарма, хуçалăх тата парторганизаци руководителĕсен пуçарулăхпа ответлăхне ӳстерсе пыма тăрăшать.

Л. МОЛЧАНОВ,

КПСС Канаш хула комитечĕн промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕ.

Чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес пирки

«Чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес ĕçри хăшпĕр çитменлĕхсем çинчен» А. Иванов çырнă статья*) пирки манăн çакна калас килет.

Октябрьти Социализмла Аслă революциччен чăваш чĕлхи тивĕçлĕ вырăн йышăнман. Ĕлĕкхи шкулта чăваш чĕлхи грамматикине пачах вĕренттермен, чăвашла вулама тата çырма анчах вĕрентнеленĕ.

Чăваш чĕлхине ĕлĕкех тĕпчекенсем пулнă. Вĕсенчен Н. И. Золотницкий тата Н. И. Ашмарин паллă вырăн йышăнса тăнă. Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхин синтаксисне те, морфологине те тĕплĕн тĕпченĕ. Анчах та çак ученăйсем тĕпчени халăхăн, массăсен тивĕçĕ пулса тăрайман, мĕншĕн тесен чăваш халăхĕ хушшинче вĕреннĕ çынсем сахал пулнă. Патша правительствин чиновникĕсем пирĕн культурăна аталанма паман, халăха тĕттĕмре усранă, тĕттĕм халăха пусмăрлама çăмăлтарах пулнă. Мĕнле йывăр пурăнсан та, ăна мĕнле хĕсĕрлесен те, унран кулса мăшкăлласан та, халăх хăйĕн чĕлхине упранă. Çапла пирĕн тăван чĕлхе Октябрьти Социализмла Аслă революцие çитрĕ.

Пирĕн чĕлхе валли И. Я. Яковлев шухăшласа кăларнă алфавит çителĕксĕр пулса тăчĕ. Ку алфавитпа вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене тĕрĕс çырма тата вулама май килмен. Çавăнпа пирĕн алфавитри саспаллисен йышне ӳстермелле пулчĕ. Пирĕн чĕлхен словарĕ техника, хуçалăх, культура ӳснĕ май пысăкланса пырать. Совет влаçĕ пулнă хыççăн пирĕн пуçламăш тата вăтам шкулсем валли грамматика кĕнекисем çут тĕнче курчĕç, литература хрестоматийĕсем, учебникĕсем пичетленсе тухрĕç. Октябрьти революци хыççăн чăваш халăхĕн поэчĕсем, писателĕсем çултан-çул хăйсен йышне ӳстерсе пыраççĕ. Ирĕке тухнă халăх тăван литературăна, политикăлла, хуçалăхла кĕнекесене тăван чĕлхепе вулать. Оригиналлă литературăсăр пуçне, вырăс чĕлхинчен тата ытти чĕлхесенчен куçарнă литература та тивĕçлĕ вырăн йышăнать. Вырăс халăхĕ пирĕн аслă пичче вырăнĕнче шутланать. Эпир вырăс халăхĕнчен кĕрешме, ĕçлеме, пурăнма вĕренетпĕр.

Пирĕн чĕлхе вырăс чĕлхинчен уйрăлса тăрать, анчах та пĕрпеклĕхсем те сахал мар. Предложени пайĕсен шучĕ вырăс чĕлхинче те, чăваш чĕлхинче те пĕр пекех. Предложени членĕсем енчен те çак икĕ чĕлхе нихăш енчен те уйрăлса тăмаççĕ. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕн шучĕ те пĕр пекех. Пирĕн чăвашсен предложени конструкцийĕ расна: калуллă предложенире предложени членĕсем хăйне уйрăм закона пăхăнса вырнаçаççĕ.

А. Иванов хăйĕн статьинче çапла калать: **«чăваш чĕлхинче тăву падежĕ çук»**, тет. Ку вăл вырăс грамматики влиянийĕпе пулса тăнă имĕш. Тепĕр утăмран **пару-тăву падежĕ пур** тесе ĕнентерет. Хайхи çук япала пур пулса тăчĕ. Иванов пару падежĕпе тăву падежне пĕрлештерессĕн пулни сисĕнет. Чăнах та, ку çăмăллăх кӳмелле пек. Çапах та чĕлхери факта чĕрсе, хуратса пăрахма эпир пултараймастпăр. Пирĕн чĕлхере те пару падежĕ те, тăву падежĕ те пурах. Тăву падежĕ тулли тата кĕске формăсенче ларать. Пару падежĕпе тулли формăри тăву падежĕнчи япала ячĕ тулашĕнчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Тулли формăри тăву падежĕнчи япала ячĕ кĕске формăра та ларма пултарать. Пару падежĕнчи япала ячĕ кĕске формăра нихçан та лармасть.

Тĕслĕхрен илĕпĕр: «Эпĕ магазинтан кĕнеке илтĕм». «Эпĕ магазинтан çак кĕнене илтĕм». «Кĕнеке», «кĕнекене» япала ячĕсем тăву падежĕнче тăраççĕ. Тепĕр тĕслĕх илĕпĕр: «Выльăха апат патăм», «Трактора бензин кирлĕ», «Ачасем экскурсие вăрмана кайнă». Çак предложенисенче «выльăха», «трактора», «вăрмана», сăмахсем пару падежĕнче тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кĕске формăра лармаççĕ, вĕсен пĕлтерĕшĕ те тăву падежĕн пĕлтерĕшĕнчен пачах уйрăм, çыхăнасса та вĕсем тăву падежĕнчи япала ячĕ пек çыхăнмаççĕ.

А. Иванов чăваш чĕлхи грамматикине тата икĕ падеж кĕртесшĕн: тĕллев падежĕ, çуклăх падежĕ. Тĕллев падежĕ тени тĕрĕсех те мар пулĕ, пирне падежĕ тесен тĕрĕсрех пулмалла. Çуклăх падежне кĕртни кирлех мар пек. «Сăр-сĕр» аффикссем хушăннă сăмахсене паллă ячĕсем çине е наречисем çине ямалла пулать. Ку вăл çыхăнуран килет. Тĕслĕхсем: «Çилсĕр çанталăк пулчĕ». «Çилсĕр»—паллă ячĕ. «Халĕ тракто[illegible]халамастпăр». «Тракторсăр»—на[illegible]

А. Ивано[illegible]стла çул çинелле нăрăнни сисĕ[illegible] форма енчен пĕр пек сăмаха, ун пĕлтерĕшне пăхмасăр, ун çыхăнăвне асра тытмасăр, вăл предложенире мĕнле члене уямасăр, пурне те тĕп падежри сăмах туса хурасшăн. Ку сăмалне çăмăл та, анчах та подлежащие, дополнение, определение уйăрса илме чăрмантаракан сăлтав пулса тăрать. «Пирĕн совет лайăх ĕçлет, «Совет учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатмалла», «Совет организацилерĕç» предложенисенче «совет» сăмах ниепле те пĕр падежри сăмах пулма пултараймасть. «Совет» сăмах кашни предложенире уйрăм член, çавăн пекех уйрăм падежри япала ячĕ. Эпир, çăмăллăх шыраса, грамматикăра йăнăш çулпа кайма пултараймастпăр. Пĕр пек формăри пĕр сăмахах, çыхăнăва кура, тĕрлĕ предложени пайĕнче тăни сахал мар тĕл пулать. Тĕслĕхсем: «Аван кĕнекене вуланăçемĕн вулас килет». «Шăпчăк аван юрлать». «Аван» сăмах малтанхи предложенире паллă ячĕ, иккĕмĕш предложенире наречи пулать. «Эпир юрă итленĕ», «Итленĕ юрра хапăлларĕç», «Итленĕ» сăмах малтанхи предложенире глагол пулать, иккĕмĕш предложенире—иртнĕ причасти пулать.

Чăваш чĕлхинче татса паман ыйтусем нумай-ха: «пур», «çук» сăмахсем мĕнле предложени пайĕ пулнине татса каламан. Япала ячĕсем хыççăмахсемпе пĕрле тăнă чухне мĕнле падежра тăнине грамматикăра тĕплĕ ăнлантарман, ăнлантарас вырăнне пăтраштарнă кăна. Хыççăмахпа пĕрле тăракан япала ятне ят падежĕнче тенĕ. Тĕлĕнмелле?! Хыççăмах вырăнне вырăс чĕлхинче—предлог. Предлогпа пĕрле тăракан сăмах ят падежĕнче нихçан та лармасть. Ят падежĕнчи сăмах яланах предложенире подлежащи е сайра хутра обращени пулать. Тĕслĕх. «Лавсем шоссе урлă каçрĕç», «Шоссе урлă», ыйтăвне кура, («ăçтан?») туху падежĕнче пулмалла. «Çул тăрăх машинăсем чупаççĕ». «Çул тăрăх», ыйтăвне кура, («ăçта?») вырăн падежĕнче лармалла. «Кĕмĕл çĕрĕ», «ылтăн çăлтăр», «пăхăр укçа» йышши сăмах çыхăнăвĕсенче «кĕмĕл», «ылтăн», «пăхăр» сăмахсене мĕнле предложени пайĕнчи сăмах вырăнне шутламалла-ши? Япала ячĕ тесе шутлама ниепле те май килмест. Вĕсен ыйтăвĕ «мĕнле?». «Мĕнле?» ыйту паллă ячĕсенче тĕл пулать. Çапла ĕнтĕ, асăннă сăмахсем тата ытти ун йышши çыхăнури сăмахсем паллă ячĕсем пулаççĕ.

Шкулта ĕçленĕ чухне тĕрлĕрен йывăрлăхсем чылай тĕл пулаççĕ. Грамматикăра яр-уççăн татса паман ыйтусене татса пама вăхăт çитнех.

С. УГАНДЕЕВ.

*) А. Иванов статьи «Коммунизм ялавĕ» хаçатра июнĕн 28-мĕшĕнче пичетленсе тухнă.

Аслă туслăх

Пĕлĕт евĕр курăнакан Дрисвяты текен кӳлĕ темĕн сарлакăш сарăлса выртать. Кăнтăрпа хĕвелтухăç енчен вăл Белоруссири колхозсен çĕрĕсем патне, хĕвеланăçĕнчен—Литвари, çурçĕрелле — Латвири колхозсен улăхĕсемпе вăрманĕсем патне çитет. Кунти вырăнсем пуян та илемлĕ. Çăра вăрмансем, уй-хирсем тăçта çити тăсăлса выртаççĕ.

Çак çĕрсен хуçисем—белоруссем, литовецсем, латышсем тахçан авалтанпах хĕн-хур курса пурăннă. Инкек шăписĕр пĕр кил те пурăнман. Польша панĕсемпе нимĕç баронĕсем кӳлĕ çывăхĕнчи ялсенчи хресченсене пĕр хĕрхенмесĕр эксплуатациленĕ. Буржуалла националистсем белоруссем, литовецсем, латышсем хушшинчи хирĕçӳсене вăйлатса пынă. Кунта тахçантанпах пурăнакан çынсем ĕлĕкавал час-часах юнлă тытăçусем пулса иртни çинчен каласа параççĕ. Литовецсем белоруссем çине, белоруссем латышсем çине тапăннă. Харампырсем кӳ çапăçусем çине пăхса кулнă кăна.

Совет влаçĕ пулса тăнă хыççăн, кӳлĕ тавраşĕнчи хресченсен пурнăçĕ тĕпренех улшăнчĕ. Дрисвяты кӳлли çийĕнче ирĕклĕх хĕвелĕ çуттăн йăлтăртатма пуçларĕ. Аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе белоруссем, литовецсем тата латышсем çĕнĕ, телейлĕ, савăнăçлă пурнăç тума пуçларĕç. Вĕсем тăван çĕрсене тĕрĕс мар уйăрса тăракан чикĕ юписене яланлăхах тăпăлтарса кăларчĕç. Колхозăн ирĕклĕ ĕçĕнче халăх хăйĕн телейне тупрĕ. Хăйсен тăван çĕрĕпе тулли праваллă хуçасем пулса тăнă Белорус, Литва тата Латви колхозникĕсен арканми çирĕп туслăхĕ çулсерен ӳсе çирĕпленет.

1951 çулти кĕркунне Дрисвяты кӳлли çинче гидроэлектростанци тума шутларĕç. Ку строительствăна Белоруссири Видзовски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан, Литвари—Дукштасски районĕнчи Адам Мицкевич ячĕпе тăракан, Латвири — Гривски районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксем пуçарчĕç. Часах вĕсен çумне çывăхри тата çичĕ колхоз хутшăнчĕç. Пулас гидроэлектростанцие халăхсен арканми çирĕп туслăхĕ ячĕпе «Халăхсен туслăхĕ» тесе ят пама йышăнчĕç.

Колхозниксен пуçарулăхне çак виçĕ республикăри партипе совет органĕсем хĕрӳллĕн пулăшрĕç. Иртнĕ çулти февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче Дрисвяты кӳлли патне Белоруссири ялсенчи электростанцисен проектне тăвас енĕпе ĕçлекен государство институчĕн филиалĕн сотрудникĕсем пычĕç. Вĕсем—топографсем, геологсем, пăрапа ĕçлекен мастерсем—пулас стройкăра ĕçлеме кирлĕ çынсем. Çанталăк начар пулнине пăхмасăрах, вĕсем тĕпчев ĕçĕсене пурне те кĕске вăхăтра пурнăçларĕç, июнь уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне вара строительсем гидроэлектростанци проектне алла илчĕç. Стройка патне тĕрлĕрен материалсемпе механизмсем илсе пыма пуçларĕç.

Гидроэлектростанцие Дрисвяты тата Оболе ятлă кӳлĕсем хушшине тума йышăнчĕç. Электростанци проектне тунă чух çав кӳлĕсенчи шывсен çӳлĕшне тĕплĕн шута илчĕç. Каховка ГЭС-не тăвакансен примерĕпе усă курса, станци çуртне эпир тип çĕр çине туса лартрăмăр. Унта шыва каналсем тăрăх илсе пымалла турăмăр. Çапла вара, станцие хăйне туничченсĕр пуçне, строительсен кӳлĕсемпе шыв усрамалли вырăн хушшине (тӳрех ГЭС умне) пĕрлештерекен, шыв илсе пыракан тата ăна илсе каякан каналсем чавмалла пулчĕ. Кунсăр пуçне икĕ пĕве тумалла пулчĕ. Çавăн пек тусан Дрисвяты кӳллинче шыв шайĕ чылай хăпарать тата шыв запасĕ пулать. Çак шыв запасĕ 300 киловатт хăватлă, çулталăкра миллион ытла киловатт сехет электроэнергй туса кăларакан электростанцие ĕçлеттерме пултарать.



«Халăхсен туслăхĕ» ятлă гидроэлектростанци çурчĕ.
М. МИНКОВИЧ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ГЭС никĕсне хывнă хыççăн стройкăра ĕçсем тата ытларах вăйланса кайрĕç. Вĕсемсĕр чул, хăйăр, цемент, йывăç тиенĕ лавсем пырса тăчĕç. Стройкăна хутшăннă Белоруссири, Литвари, Латвири колхозсем кунта ĕçлеме вуншар автомашинăсемпе лавсем, çĕршер çынсем ячĕç. Строительствăра васкавлă меслетсемпе вăхăтлăх электростанци, хăма çуракан завод, тимĕрçĕ лаççипе ытти кирлĕ предприятисем, рабочисем валли общежитисем туса лартрăмăр.

Электростанци строителĕсен пурĕ 35 пин кубометр ытла çĕр ĕçĕ тумалла, 800 кубометра яхăн чул сармалла, пин кубометр ытла тимĕрпе бетон хывмалла, 200 кубометра яхăн кирпĕч купаламалла пулчĕ. Паллах, ку ĕçсене пурне те колхозсен вăйĕсемпе туса çитерме май пулман. Çак ĕçре Совет государстви пысăк пулăшу пачĕ. Вăл колхозсене нумай вăхăтлăха кивçен укçа уйăрса пачĕ, стройкăна хăватлă тракторсем, автомашинăсем, скреперсем, бульдозерсем тата ытти машинăсемпе механизмсем парса пулăшрĕ. Çавăн пекех унта «Сута-1» текен трактор агрегатне илсе пытăмăр. Çак машина çĕр чавмалли экскаватор, тăпрана куçармалли бульдозер, свай çапмалли копĕр, шыв çулне тасатмалли драглайн, тягач тата груз çĕклемелли кран вырăнне ăнăçлăн ĕçлеме пултарчĕ. Кунсăр пуçне ГЭС строительствинче башньăллă кранпа та ăнăçлăн усă курса ĕçлерĕмĕр.

Атăл, Дон тата Днепр çинчи гигантла гидросооруженисем тăвакансен пуян опычĕпе усă курса, эпир строительсен ĕç процесĕсене пĕрлештерессине организацилерĕмĕр. Ку вăл электростанцие туса лартас ĕçе самаях хăвăртлатрĕ. Строительсем пĕр вăхăтрах ГЭС çуртне туса лартрĕç, каналсем, пĕвесем турĕç. Вĕсем котлована тасатассине, çурт-йĕр тумалли вырăна планлассине, пур ĕçе те тума пултаракан трактор агрегачĕпе усă курса, 10 кун хушшинчех туса çитерчĕç. Гидроузела тума кирлĕ тĕп ĕçсене—шпунт çапса лартассине, чул тата тимĕрпе бетон купалассине—строительсен хĕллехи йывăр условисенче тумалла пулчĕ.

Кĕркуннехи хытă кĕрлесе юхакан шыв çынсене йĕпетрĕ, котлована юхса кĕме пуçларĕ, ăна шыв айне тăвассипе хăратрĕ, çулсем те япăхланчĕç. Строительство материалĕсен запасĕсем хăвăрт пĕтме пуçларĕç. Ĕç чарăнса ларас патнех çитрĕ. Анчах та çирĕп туслăха пĕрлешнĕ строительсем йывăрлăхсенчен хăраса тăмарĕç. Вĕсем, коммунистсемпе комсомолецсенчен пример илсе, пысăк хавхаланупа ĕçлерĕç. Насуссем котловантан çумăр шывне уçласа кăларма пуçларĕç. Строительствăра кирлĕ материалсене кӳрсе килес ĕçре гусеничнăй тракторсемпе усă куртăмăр. Çапла майпа станци çурчĕн шыв айĕнчи пайне вăхăтрах купаласа çитертĕмĕр.

Хĕлле ĕçлеме татах та йывăр пулчĕ. Яланах çил-тăмансемпе витĕр касакан сивсем вĕрсе тăчĕç. Апла пулин те бетона купаласси пĕр сехет те чарăнса тăмарĕ. Шăнса ларакан япаласене, шыва тата бетона пăспа ăшăтрăмăр. Колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлерĕç.

Строительствăна пысăк квалификациллĕ рабочисем—бетонщиксем, арматурщиксем, каменщиксем, скреперистсем кирлĕ пулчĕç. Стройкăна пынă колхозниксем, йывăрлăхсене çĕнтерсе, строительсемпе механизаторсен специальноçĕсене ăнăçлăн вĕренсе пычĕç. Сăмахран, Белоруссирен килнĕ Видзовски районĕнчи «Новый свет» ялхуçалăх артелĕн членĕ Сигизмунд Ясинович стройкăра ĕçленĕ вăхăтрах тракторист, скреперист тата локомобиль машинисчĕн специальноçĕсене вĕренсе алла илчĕ. Литовец Франц Падицкис пысăк квалификациллĕ скреперист пулса тăчĕ. Латышкăсем—Анна Смильгинпа Вера Догис, белорус Ефим Коржухов, литовец Альфонс Дылевич тата ыттисем те бетонщиксем пулса тăчĕç. Гидроузела тунă çĕрте пур ĕçсене те, монтажпа хăшпĕр ытти ĕçсемсĕр пуçне, колхозниксем хăйсемех, специалистсемсĕрех пурнăçа кĕртрĕç.

Суркунне пуçланасан колхозсене электрификацилесси, пысăк вольтлă тата пĕчĕк вольтлă линисене тăвас ĕçсем анлăн сарăлчĕç. Белоруссири Молотов ячĕпе тăракан колхозра 25 электродвигатель ĕçлеме пуçламалла. Литвари Адам Мицкевич ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче вăтăр ытла электромотор вырнаçтармалла. Çапла майпа колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен фермăсене шыв парса тăрассине, выльăх апачĕ хатĕрлессине, авăн çапассине тата ытти пысăк вăй хумалли ĕçсене те пĕтĕмĕшпех электричество вăйĕпе механизацилеççĕ. Ялхуçалăх производствине механизациленинчен Латвири Свердлов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ те пысăк пулăшу илет. Шутласа пăхнă тăрăх, фермăсене шыв парса тăрассине, ĕнесене электричество вăйĕпе сăвассине механизацилени кăна çулталăкне тăватă пин ĕçкунне перекетлеме май парать. Стройкăна хутшăннă колхозсенче 200 ытла электромотор ĕçлеме пуçламалла. Кĕçех шкулсенче, ялти клубсенче, больницăсенче, колхозниксен çурчĕсенче электричество лампочкисем çутатма пуçлаççĕ. Çавăн пекех электростанци колхоз радиоузелĕсемпе киноустановкисене электроэнерги пама пуçлать.

Колхозниксем халĕ телейлĕ те савăнăçлă кунсене пурăнса ирттереççĕ. Çулталăк каялла тăпра чавма пуçланă вырăнта хăйсен аллисемпе туса лартнă илемлĕ гидроэлектростанци çурчĕ ӳсе ларчĕ. Унăн пысăк та çутă залне генераторсем тата машинăсен ĕçне йĕркелесе тăракан оборудовани вырнаçтарса лартнă та ĕнтĕ. Çитес кунсенчех Дрисвяты кӳллинчи шыв вăйĕне турбинăсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Çапла вара, колхозниксен килĕсене, ялти клубсемпе шкулсене, фермăсене тата мастерскойсене электричество вăйĕ пырать. Кӳлĕ çывăхĕнчи ялсенчи колхозниксен пурнăçĕ татах та илемлĕрех пулать.

«Халăхсен туслăхĕ» ятлă гидроэлектростанцие туни пĕтĕм совет халăхĕн пĕрлĕхĕпе нихçан арканми çирĕп туслăхне кăтартать. Ăна тăвас ĕçе Белоруссири, Литвари тата Латвири колхозсем кăна мар, Уралти труба тăвакансем, Ленинградри тата Ереванри трансформаторщиксем, Могилеври локомобиль тăвакансем те хутшăнчĕç. Россия Федерацийĕнчи, Белоруссири, Литвари, Латвири, Украинăри, Арменири тата ытти союзлă республикăсенчи 80 предприяти ытла стройка заказĕсене пурнăçа кĕртсе пычĕç.

Виçĕ тăванла республика—Белорусси, Литва, Латви республикисен чиккисем пĕрлешнĕ вырăнта туса лартнă «Халăхсен туслăхĕ» ятлă гидроэлектростанцин пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Вăл Ленинпа Сталин ССР Союзĕнчи ирĕклĕ халăхсен туслăхĕ çинчен вĕрентнĕ вилĕмсĕр идейисем пурнăçа кĕрсе пырса, никам аркатайми хăват пулса тăнине çуттăн кăтартса паракан тĕслĕх пулса тăрать.

Л. СКОРОБОГАТЫЙ,

«Халăхсен туслăхĕ» ятлă гидроэлектростанци строительствин начальникĕ.

Китайри предприятисенче Совет çĕршывĕнчи ĕç меслечĕсемпе усă кураççĕ

ПЕКИН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Китай Халăх Республикинчи предприятисенче Совет Союзĕнчи паллă токарĕн Колесовăн ĕç опытне анлăн сараççĕ. «Дунбэйжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, государствăн Мукденри машинăсем тăвакан вунă предприятийĕнче токарьсем—100 çынна яхăн Колесов меслечĕпе ĕçлеççĕ. Машинăсем тăвакан пĕрремĕш заводри рабочисем Чэн Сян, Ван Чун-хуан, Ван Бао-сян, Ян Лян-е, металсене çĕнĕ меслетпе касма вĕренсе çитсе, ĕç тухăçлăхне 4—6 хут ÿстернĕ.

Колесов меслетне тĕплĕн вĕренни, тесе çырать хаçат, унпа усă курассине анлăн сарма май пачĕ. Çапла, сăмахран, металсене çĕнĕ меслетпе касса якатмалли ревецсемпе ĕçлеме вĕренсе çитнĕ хыççăн, машинăсем тăвакан 20-мĕш заводри токарь Тао Юн-цай поперечно-строгальнăй станок çинче металсене ăнăçлă касма пуçланă. Вăл касса савалана детальсем паха пулаççĕ. Детальсем туса кăларассине виçĕ хут ÿстернĕ. Машинăсем тăвакан 1-мĕш заводри строгальщиксен (тимĕр савалакансен) бригади продольно-строгальнăй станок çинче çĕнĕ меслетпе ăнăçлă ĕçлеме пуçланă хыççăн ĕç тухăçлăхне 6 хут ÿстернĕ. Бригада лайăх продукци туса кăларать.

Колесов меслечĕпе 724-мĕш заводри, машинăсем тăвакан 10-мĕш заводри тата ытти предприятисенчи строгальщиксем ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Польшăра пулă тытас ĕç вăйланать

ВАРШАВА, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Нумай пулмасть Гдыня портĕнчен Çурçĕр тинĕсне Польшăн пулă тытмалли карапĕсен пысăк флотилийĕ тухса кайнă. Флотилире—«Морска воля» ятлă базăри 15 карап. Флотили Çурçĕр тинĕсре виçĕ уйăх çурă хушши сельдь тытса çÿреме кайнă. Пулăçсем Польша халăхĕ ирĕке тухнă куна—июлĕн 22-мĕшне—уявланă ятпа срокчен пулă тытма пуçлама тата плана ирттерсе тултарма обязательствăсем илеççĕ. Польша Халăх Республикинчи ĕççыннисем çĕршыв ирĕке тухсанах, Совет Союзĕ тăванла пулăшнипе, пулă тытмалли хуçалăха юсама пуçланă. Кĕске вăхăт хушшинчех Балти тинĕсĕ хĕрринчи пулă тытакансен карапĕсем тăмалли портсене çĕнетнĕ тата ку чухнехи паха техникăпа пуянлатнă. Хальхи вăхăтра Польшăн пулă тытмалли пысăк флот пур.

Польшăри пулă тытакансен карапĕсем тăмалли портсен сăн-сăпачĕ улшăннă. Колобжег тата Устка порчĕсенче юлашки çулсенче пысăк холодильниксем, складсем тата ытти çуртсем тунă. Гдыньăри пулă тытакансен карапĕсем тăмалли портра пулăсене сортламалли пысăк зал, холодильник тата складсем тунă, вĕсене ĕçе янă. Свиноуйсьцере Польшăн пулă тытмалли карапĕсен ку чухнехи базине тăваççĕ. Кунта пулă комбиначĕ тата пулă усрама, сортлама, шăнтма ятарласа çуртсем лартаççĕ.

Польшăри пулăçсем çултан-çул ытларах та ытларах пулă тытаççĕ. Пĕлтĕр Балтика тинĕсĕнче пулă тытакансем 1949 çулхинчен 45 процент ытларах пулă тытнă. Çав вăхăт хушшинче сельдь тытасси 125 процент ÿснĕ.

Польша Халăх Республикинчи пулăçсем пулă тытас ĕçе ăнăçлă пурнăçлассишĕн пыракан социализмла ăмăртăва анлăрах та анлăрах сараççĕ. Пулăçсен 80 проценчĕ ытла пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет. Вĕсем Совет çĕршывĕнчи малта пыракан пулăçсен ĕçри опычĕпе анлă усă кураççĕ.

Индире ĕççĕр юлнисен йышĕ ÿснĕ

ДЕЛИ, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Бомбей кроникл» хаçат «Инженерсемпе докторсем ĕç шыраççĕ» ятлă статьяра: Бомбей биржине аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă çынсем ĕç тупса пама, тарçă вырăнĕнче те пулин ĕçлеме ĕç ыйтма пыраççĕ. Анчах вĕсем, тесе çырать хаçат, çакăн пек ĕç те тупма пултараймаççĕ.

«Таймс оф Индиа» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нумай вĕреннĕ çынсем хушшинче ĕççĕр юлнисен йышĕ ÿссе пырать. Нумаях пулмасть вырăнти ĕç биржи 65 пушă вырăн пулни çинчен пĕлтерсен, 2.600 çын çак вырăнсене кĕме заявлени панă. Вĕсенчен 1.700 çын—аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем.

Индири наци конгресĕ ятлă партин Пĕтĕм Индири комитечĕн хальхи вăхăтра Агр хулинче пулса иртекен сессийĕ экономика ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă резолюцире «çĕршывра ĕç тивĕçменни ÿссе пынă» пирки питех те пăшăрханнине палăртнă.

Индири наци буржуазийĕ те ĕççĕр юлнисен йышĕ ÿснĕ пирки пăшăрханать. Наци буржуазийĕн пуçлăхĕсем тарифсемпе суту-илÿ çинчен Пĕрлешÿллĕ Штатсем йышăнтарнă «пĕтĕмĕшле килĕшĕве» пăрахăçа кăлармалла тума ыйтаççĕ, мĕншĕн тесен çак килĕшÿ çĕршыв индустрине аталантарассине чарса тăрать.

«Коммерс» журнал çапла пĕлтерет: нумаях пулмасть Индири суту-илÿпе промышленность палатин федерацийĕ правительствăна меморандум тăратнă. Федераци правительствăран «çак килĕшĕве хутшăннă çĕршывсен шутĕнчен тухасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухма» ыйтать.

Австралири забастовка тунă горняксен çĕнтерĕвĕ

СИДНЕЙ, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Джон Дарлинг» ятлă шахтăра тĕмиçе уйăх хушши забастовка пынă. Хаçатсем çав забастовка чарăнни çинчен пĕлтереççĕ. Рабочисемпе предприяти хуçисем хушшинче профсоюз деятельне Стирса ĕçрен кăларса янă пирки хирĕçÿ тухнă пулнă. Горняксен профсоюзĕн федерацийĕн представителĕсемпе шахта хуçин — «Брокен хилл пропрайетэри компанин» представителĕсем хушшинче калаçусем пулнипе çав хирĕçĕве йĕркеленĕ. Забастовка тăвакансем хĕснипе шахта хуçисен ĕçрен кăларнă рабочие ирĕксĕрех каялла ĕçе илме тивнĕ.

Америкăри шахтăсен хуçисем рабочисене хĕсĕрлеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Уолл-стрит джорнэл» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăрти шахтăсене тытса тăракан хуçасен пĕрлешĕвĕ профсоюзсемпе тунă договора улăштарса рабочисен ĕç укçине чакармалла тăвасшăн. Хуçасем шахтăсене нумай вăхăтлăха, «рабочисем профсоюзран тухса ĕçе таврăниччĕнех» хупасшăн. Договорсене çĕнĕрен пăхса тухмалли кампание августăн 1-мĕшĕнчен пуçлама палăртнă. Чăннипе вара, халиччен тунă договор тăрăх, ăна улăштарас пирки 60 кун маларах пĕлтермелле пулнă.

Кăнтăрти шахтăсенче 50 пин горняка яхăн ĕçлет. Çав горняксем Пĕрлешÿллĕ Штатсенче кăларакан пĕтĕм çĕр кăмрăкĕн тăххăрмĕш пайне кăлараççĕ.

Францин наци пухăвĕнче

ПАРИЖ, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Францири наци пухăвĕнче ĕнер тата паян Ланьель правительстви финанс ыйтăвĕ тăрăх тăратнă закон проектне сÿтсе явнă. Сылтăм партисен депутачĕсем хăйсен сăмахĕсенче правительство çĕнĕвĕсене ырланă, пĕчĕк улшăнусем кăна кĕртнĕ. Коммунист-депутат Жорж Госна правительство çĕнĕвĕсене хыттăн критикленĕ, вĕсене сирсе яма сĕннĕ.

Наци пухăвĕнчи коммунистсен ушкăнĕ монополистла пысăк трестсене налог тĕлĕшĕнчен нимĕнле çăмăллăх та памалла мар тума сĕнÿ тăратнă. Çакăн пек туни правительство ыйтакан 60 миллиард франк укçана тупма май парать. Çавăн пекех коммунистсен ушкăнĕ Индо-Китайри вăрçă валли уйăрнă укçана кăçал 35 миллиард франк чухлĕ чакарма, çитес çулсенче вара кашни çул 70-шер миллиард франк чакарса пыма сĕннĕ. Анчах та наци пухăвĕнчи сылтăмри ытларахăш çак сĕнÿсене сирсе пăрахнă. Социалистсем çав ыйтусем тăрăх сасăланă чухне иккĕмĕш хутĕнче те сасăламасăр юлнă.

Правительство пуçлăхĕ Ланьель: «государство хысни пушă» тенĕ, вăл правительство тăратнă закон проектне çирĕплетме ыйтнă. «Правительство тытăнса тăрасси закон проекчĕн 2-мĕшпе 3-мĕш статьисене çирĕплетнинчен килет», тенĕ. (Ку статьясем герб укçи пухасси тата горючишĕн налог илмелле тăвасси çинчен калаççĕ). «Наци пухăвĕ ман хыççăн пымасть пулсан, эпир çакăнтан тивĕçлĕ вывод тăвăпăр», тенĕ юлашкинчен Ланьель.

Çапла вăл отставкăна тухассипе хăратнă.

Правительство çав статьясене йышăнтарнă. Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 8-мĕшĕнчи ирхи ларура наци пухăвĕ правительство финанс ыйтăвĕ тăрăх тăратнă закон проекчĕн пур статьисене те 314 сасăпа çирĕплетнĕ.

Финляндин çĕнĕ правительстви

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Республика президенчĕ Паасикиви паян Финляндин çĕнĕ правительствине çирĕплетнĕ. Правительствăна Урхо Кекконен туса йĕркеленĕ. Правительствăна çаксем кĕнĕ: Урхо Кекконен (аграрнăй союз) — премьер-министр; Ральф Торнгрен (шведсен халăх партийĕ)—ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ; Виено Сукселайнен (аграрнăй союз)—шалти ĕçсен министрĕ; Теуво Аура (партире тăмасть)—суту-илÿпе промышленность министрĕ; Кауно Клеемола (аграрнăй союз)—оборона министрĕ; Юхо Ниукканен (аграрнăй союз)—финанс ĕçĕсен пĕрремĕш министрĕ; Нильс Мейнандер (шведсен халăх партийĕ)—финанс ĕçĕсен иккĕмĕш министрĕ; Свен Хегстрем (шведсен халăх партийĕ)—юстици министрĕ; суту-илÿ советникĕ Лаури Хиетанен (партире тăмасть)—социальнăй ĕçсен пĕрремĕш министрĕ; Виено Симонен госпожа (аграрнăй союз)—социальнăй ĕçсен иккĕмĕш министрĕ; Иоганнес Виролайнен (аграрнăй союз) — çутĕç министрĕ; сăрт-ту ĕçĕн советникĕ Ээро Мякинен (партире тăмасть) — çул-йĕрсемпе обществăлла ĕçсен пĕрремĕш министрĕ; Кусти Эскола (аграрнăй союз)—çул-йĕрсемпе обществăлла ĕçсен иккĕмĕш министрĕ; Мартти Миеттунен (аграрнăй союз)—çĕрĕç министрĕ.

ЛИВАНРИ СУЙЛАВ УМĔН

БЕЙРУТ, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ливан хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 6-мĕшĕнче Бейрутри рабочисен делегацийĕ правительство çуртне пырса Мазраа округĕнчи (Бейрут) 5 пин суйлавçă алă пуснă протеста панă. Çак округра вĕсем парламента суйлама рабочи юхăмĕн паллă деятельне Мустафа Ариса кандидата тăратнă.

Влаçсем Мустафа Ариса суйлава хутшăнма кансĕрлеме пăхнине хирĕç делегаци хыттăн протестленĕ. Делегаци правительствăна çапла пĕлтернĕ: правительство Мустафа Арисс кандидатурине регистрацилес мар пулсан, рабочисем пĕтĕмĕшле забастовка пуçлаççĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн чаçĕсем Коранпхори районĕнче тата Кахориреп кăнтăр-хĕвеланăçĕнче тăшмана хирĕç хăшпĕр вырăнсенче çапăçнă.

Июлĕн 9-мĕшĕ умĕн çĕрле Америка авиацийĕ Кăнтăр Хамген провинцийĕнчи Хыннам хули районĕсене тапăннă, унта бомбăсем нумай пăрахнă. Граждансем халăх хушшинче вилнисем пур. Нумай çуртсемпе землянкăсене аркатнă.

Паян самолетсене хирĕç çапăçакан салтаксем тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ.

Ли Сын Манăн провокациллĕ ĕçĕсем çинчен Корейăри хаçатсем мĕн çыраççĕ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи хаçатсем Америка империалисчĕсен вăрттăн ĕçĕсене тăрă шыв çине кăлараççĕ. Империалистсем Ли Сын Мана Корейăри вăрçа малалла тăсма хĕтĕртни çинчен çыраççĕ хаçатсем.

Ют çĕршывсенчи буржуалла агентствăсем Ли Сын Манпа США государство секретарĕн помощникĕ Робертсон хушшинче калаçусем пыни, Робертсон калаçусем вăхăтĕнче Ли Сын Мана Корейăра перемири тăвассине хирĕç тăма пăрахмашкăн ÿкĕтлени çинчен пĕлтерчĕç. Ку пĕлтерÿсем пирки Корейăн тĕп телеграф агентстви (ЦТАК) июлĕн 8-мĕшĕнче çапла çырнă: çав калаçусем вутпа выляна пекех хăрушă вăйă пулса тăраççĕ, калаçусен тĕллевĕ Корейăри юнлă вăрçа малалла тăсасси пулать.

Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Корейăпа США «хăрушсăрлăх тума пĕр-пĕрне пулăшмалли пакт» текенскерне тăвас пирки Робертсонпа Ли Сын Ман калаçса татăлнă ĕнтĕ, вĕсем халĕ политикăлла конференци пирки мĕнле позици тытасси çинчен сÿтсе яваççĕ. Политикăлла конференци виçĕ уйăх хушшинче пулса иртмелле тесе услови лартса, Ли Сын Ман конференци ăнăçлă иртмесен малашне те вăрçă вăрçатăп тесе калать. Вăл США-ран малалла пĕрле вăрçма килĕшÿ пама ыйтать.

Çак ыйту çине США мĕнле ответ парасси паллă мар-ха. Анчах, Юнайтед Пресс агентстви Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, Робертсон çак ыйтăва сÿтсе явма килĕшет. США çавăн пек позици тытнинчен вăл Ли Сын Мана перемири тума хĕтĕртме тăрăшманни курăнать. Пачах урăхла, США-н çавăн пек позицийĕ Ли Сын Мана килĕшÿсене малашне те пăсса пыма хавхалантарать.

США хăйĕн пуканине (Ли Сын Мана) пăхăнтарма пултарайманнине никам та ĕненмест. США ыйтăва мирлĕн татса пама чăннипех те тăрăшсан, политикăлла конференци хăйĕн задачисене ăнăçлă пурнăçлама пултарать. Апла пулсан, Корея ыйтăвне мирлĕ йĕркепе татса пама май çук тени пачах тĕрĕс мар.

Перемири тунă хыççăн хăрушсăрлăх тума «пĕр-пĕрне пулăшмалли пакт» текенскер мĕн тума кирлĕ-ха? Мĕншĕн-ха американецсем перемири тăвиччĕнех тата политикăлла конференци пухăниччĕнех çав конференци ăнăçлă иртес пирки иккĕленеççĕ тата çак ĕç ăнăççăр пуласси çинчен малтанах выводсем тăваççĕ? Ку вăл Ли Сын Ман шайккипе Америкăра влаçра тăракан хăшпĕр çынсем киревсĕр ĕçсем тума шутланă пирки çапла пулса тухать.

Ли Сын Ман пур майсемпе те вăрçа малалла тăсма хăтланать, перемири тусан хăйĕн пурнăçĕ пĕтет, тесе шутлать. Кун çинчен вăл темиçе хутчен те каласа панă ĕнтĕ. «Хăрушсăрлăх тума пĕр-пĕрне пулăшмалли пакт» текенскер сутăнчăкла договор пулса тăрать. Çак договор пулăшнипе Ли Сын Ман Кăнтăр Корейăна сутма, унтан Америкăн пĕр штачĕ туса хума хăтланать. Çак договор Кăнтăр Корейăри халăха чуралăха кĕртсе ÿкерессине тата юнлă вăрçа малалла тăсассине пĕлтерет.

Анчах Кăнтăр Корея халăхĕ Америкăн вăрçă чĕртекенĕсемпе Ли Сын Ман шайккишĕн текех юн тăкасшăн мар. Пĕтĕм тĕнчери мире юрататакан мĕнпур халăхсемпе пĕрле Корея халăхĕ часрах Корейăра перемири тăвассине кĕтет, Корея ыйтăвне мирлĕ йĕркепе татса пама ыйтать.

Англин тыткăнри çар çыннисем общинăсен палатине янă çыру

ПЕКИН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Англин Çурçĕр Корейăра тыткăнра тăракан 63 салтакĕ Англири общинăсен палатине заявлени ярса панă. Вĕсем «хальхи вăхăтра аван мар пулса тăнă йĕркене тÿрлетме» ыйтаççĕ. Ли Сын Ман тыткăнри çар çыннисене законсăр «ирĕке кăларнине» вĕсем перемири çинчен пыракан калаçусене пĕтĕмпех чарса лартма хăтланакан ĕç пулса тăрать, тесе калаççĕ.

Ли Сын Ман ĕçĕсем Корейăри вăрçа малалла тăсса пырас тенине, çапла вара эпир, тыткăнри çар çыннисем, хамăрăн тăван çĕршыва таврăнассине малалла тăсса пынине пĕлтерет.

Тыткăнри çар çыннисем çапла калаççĕ: «Эпир пĕтĕм тĕнчери халăхсем алă усса ларманнине пĕлсен тепĕр хут хавхалантăмăр. Вĕсем хăйсен правительствисем урлă халĕ алă пусса йышăннă килĕшĕве пăснăшăн айăплă çынсене тивĕçлипе ответ тыттарма ыйтаççĕ». Юлашкинчен вĕсем хăйсем «çакăн пек аван мар пулса тăнă йĕркене тÿрлетес тĕлĕшпе туса ирттерекен кирек мĕнле ĕçе те йышăнма хатĕр пулни» çинчен пĕлтереççĕ.

Англири железнодорожниксем Корейăра хăвăртрах перемири тума ыйтаççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, железнодорожниксен национальнăй профсоюзĕн кашни çул пулакан конференцине пухăннă çынсем Корейăра хăвăртрах перемири тума, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи ыйтусене сÿтсе явма пилĕк держава конференцине пухма тата хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем хушшинче суту-илĕве вăйлатма ыйтнă.

Конференци йышăннă резолюцире Британири тред-юнионсен конгресĕн тата лейбористсен парламентри оппозицийĕн правительствăран аслă державăсен конференцине пухассишĕн тата суту-илĕве вăйлатассишĕн тăрăшма ыйтмалла, тесе каланă.

Çак резолюцие Макноутэн делегат сĕннĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Ли Сын Манăн киревсĕр ĕçĕсем Корейăра перемири тăвас пирки пыракан калаçусемшĕн пысăк хăрушлăх туса хураççĕ, тенĕ.

Америка авиацийĕ Çурçĕр Корейăри мирлĕ халăхсемпе ялсем çине çаплах тапăнать

ПХЕНЬЯН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Çурçĕр Корейăри мирлĕ халăхсемпе ялсем çине çаплах тапăнать. Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Америка авиацийĕ уйрăмах Кăнтăр Хамген çине тискеррĕн тапăннă. Июнĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа 29-мĕшне çитиччен Америка самолечĕсем çак провинцири мирлĕ халăхсемпе ялсем çине 47 хутчен тапăннă. Вĕсем Хыннан хули çине тата Хамчжу, Оро, Иньчхон, Хонвон, Синсан тата ытти уездсем çине тапăнса бомбăсем пăрахнă. Çак вăхăтра Америка летчикĕсем çĕршер бомба пăрахнă.

Тăшман тискеррĕн тапăннипе Кăнтăр Хамген провинцийĕнче çĕршер çуртсемпе землянкăсене ишĕлтерсе пĕтернĕ, рис акнă вырăнсене нумай сиенленĕ. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

Перекет кассинче

Ленин ячĕпе тăракан урамри нумай чÿречеллĕ пысăк çурта тăтăшах çынсем йышлăн кĕре-кĕре тухаççĕ. Кунта Канаш хулинчи перекет касси вырнаçнă.

Перекет кассине вагонсем юсакан заводри пĕр ватăрах рабочи пырса кĕчĕ.

— Йăмăкăм, çак облигацисене тĕрĕслесе пар-ха. Тăвансем яла акатуйне чĕннĕ те, хула кучченеçне илсе каймалăх вылямĕ-ши тетĕп,—терĕ вăл.

— Вылясассăн аванах ĕнтĕ, тĕрĕслесе пăхăпăр,—кăмăллăн сăмах хушрĕ рабочирен облигацисене илсе, Г. Сергеева контролер.

Вăл облигацисене таблица тăрăх тĕрĕсленĕ вăхăтра рабочипе хулари кил хуçи хĕрарăмĕ Христина Ивановна Чернова хушшинче калаçу пуçланса кайрĕ.

— Ĕç укçи çителĕклĕ ĕçлесе илнĕ май заемне те сахалах çырăнса илместпĕр те... Çулсеренех выляса илекенччĕ-ха,—тет рабочи.

Кил хуçи хĕрарăмĕ совет влаçĕ пулăшнине пула хăйĕн ывăлĕпе хĕрĕсене аслă пĕлÿ пани çинчен, вĕсем халĕ пурте пысăк ĕçре тăни çинчен каласа парать.

Калаçу хĕрсе пынă вăхăтра контролер рабочин 2 процентлă заемĕн пĕр облигацийĕ çине пысăк выляв тухни çинчен хавасланса пĕлтерет.

— Питĕ пысăк выляв—50 пин тенкĕ,—тет контролер.

— Халĕ ĕнтĕ ку укçапа акатуйне кăна мар, Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан государство университетĕнче вĕренекен ывăлăм патне те кайса куратăп,—тет облигаци хуçи.

Контролер Чернова юлташăн облигацисене тĕрĕслеме тытăнать. Халăх хуçалăхне аталантармалли заемăн (1951 çулхи кăларăм) 100-шер тенкĕлĕх икĕ облигацийĕ 5.500 тенкĕ выляса илни çинчен пĕлтерет контролер.

Перекет касси заем облигацийĕсене тытакансене тăтăшах выляв укçи тÿлет. Çак кунсенче мастерскойри рабочи Н. Иванов 12.500 тенкĕ, М. Иванов учитель тĕрлĕ заемсен облигацийĕсене тĕрĕслеттерсе 5.800 тенкĕ, Канаш районĕнчи П. Яковлев колхозник 12 пин тенкĕ выляса илчĕç. 100, 200, 400 тенкĕ таран выляса илекенсем татах та нумай пулчĕç.

Канаш хулинчи перекет касси иртнĕ çулта кăна заем облигацийĕсене тытакансене пĕр миллион та 500 пин тенкĕ. кăçалхи 5 уйăх хушшинче 600 пин тенкĕ выляв укçи тÿленĕ. Çак вăхăт хушшинче 50 пин тенкĕ пĕр çын, 25 пин тенкĕ 4 çын, 10 пин тенкĕ 5 çын, 5-шер пин тенкĕ 11 çын выляса илнĕ.

Г. ИСАЕВ.

Хаçат-журнал нумай çырăнса илнĕ

ЭЛĔК. Мăн Выла ялĕнчи Е. Огурцов письмоносец колхозниксем хушшинче хаçат-журнал ытларах сарма тăрăшать. Вăл кăçалхи иккĕмĕш çур çулшăн «Коммунизм ялавĕ» 51 экземпляр, «Советская Чувашия» 20 экземпляр, районта тухса тăракан «Колхоз хаçатне» 54 экземпляр, 30 экземпляр ытла журнал çырантарнă.

Ĕççыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе Çирĕккассинчи Я. Петров письмоносец та паха тĕслĕх кăтартать.

Хроника

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Сергей Никифорович Круглов юлташа ССР Союзĕн Шалти ĕçсен министрĕ пулма уйăрса лартнă.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Информациллĕ пĕлтерÿ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ çинчен.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕнче.

Партин, правительствăн, совет халăхĕн никам аркатайми пĕрлĕхĕ («Правда» хаçатăн кăçалхи июлĕн 10-мĕшĕнчи умстатьи).

«Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» памалли тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен комитетра. Японири обществăлла деятеле Икуо Оямăна тĕнчери Сталинла преми пани.

Л. Скоробогатый.— Аслă туслăх стройки.

Ф. Юхтанов.— Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн куллен тăрăшмалла.

Вăрманкас ял Совечĕ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сирири лару-тăру

БЕЙРУТ, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 10-мĕшĕнче Сирире президент суйлавĕ пулать. Кунпа пĕрлех Сирин çĕнĕ конституци проекчĕ пирки пĕтĕм халăх сасăласси пулса иртмелле.

1951 çул вĕçĕнче Сири çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ Шишекли полковник государство влаçĕнче улшăну тунă хыççăн парламента салатса янă, президента вырăнтан кăларнă пулнă. Влаçа хăйĕн аллине илнĕ ушкăн хăй тĕллĕнех декретсем кăларса çĕршывра икĕ çул хушши пуç пулса тăнă.

Правительство темиçе чиновникран комитет тунă. Çав комитет çĕнĕ конституци проектне хатĕрленĕ. Проектра 1950 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче йышăннă конституци хăйĕн вăйне çухатнă, тесе пĕлтернĕ. Конституцин çĕнĕ проекчĕ тăрăх Сири çĕршывне «парламентла-президентла республика» туса хума палăртнă. Законсем кăларакан власть парламент пулать, ăна 4 çуллăха суйлаççĕ. Кипр утравĕ çинчи радиостанци пĕлтернĕ тăрăх, парламент суйлавĕ тепĕр виçĕ уйăхран пулать.

Президента 5 çуллăха суйлаççĕ. Президент аллинче чăннипе пĕтĕм власть пулать, ăна нимĕнпе пÿлмен полномочисем параççĕ. Президента влаçăн пĕтĕм ĕçне туса пыма право пама палăртнă. Правительство парламент умĕнче мар, президент умĕнче ответлă. Президент министрсене уйăрса лартать тата вĕсене вырăнтан кăларать. Президента суйлама пĕртен-пĕр кандидат тăратнă, вăл—Сири çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ тата премьер-министр заместителĕ Шишекли.

Ливанри «Ан-Нида» тата «Аль-Хадаф» хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: конституци проектне халăха пĕлтернĕ май Сирири политикăлла паллă деятельсенчен 104 çын, вĕсем хушшинче премьер-министрсем, парламент депутачĕсем тата салатса янă политикăлла партисен лидерĕсем пулнă çынсем, «Сири республикинче пулса тăнă лару-тăрушăн тĕп ответа тытма тивĕçлĕ» Шишекли патне çыру янă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çав çырура вĕсем конституци проектне тата Сирире диктатура туса хунине хытă критиклеççĕ. «Хальхи влаçсем,—тенĕ çырура,—политикăлла партисене салатса ячĕç, вĕсен укçа-тенкипе пурлăхне туртса илчĕç, кирек хăш майлă ĕçлекен партисен ертсе пыракан органĕсене те ĕçлеме чарчĕç. Нумай граждансем хăйсен айăпĕ мĕнре пулнине пĕлмесĕрех тĕрмесенче лараççĕ. Пичетре тата радио тăрăх çынсене хăйсен шухăшĕсене калама памаççĕ. Халăх хăйĕн шухăшĕсемсĕр тата идейисемсĕр тăрса юлчĕ, çакă вара идейăлла тата политикăлла пурнăç пĕтĕмпех начарланса çитесси патне илсе пычĕ».

Çырура уйрăмах çакна палăртнă: çĕршывра кăмăлсăрлăх ÿссе пырать; çав «ывăр лару-тăруран тухас шутпа» Сирири правительсен ирĕксĕрех конституцин çĕнĕ проектне хатĕрлеме тата ун пирки халăх сасăлассине ирттерме тивет. Сирири правительсем çапла майпа çĕршыври халăх хушшинче ÿссе пыракан кăмăлсăрлăха пĕтерме хăтланаççĕ.

Сирири халăхăн йышлă сийĕсем çĕршывра демократилле йĕркесем тума ыйтни çинчен çыраççĕ Ливанри хаçатсем. «Телеграф» тата «Ас-Сарха» хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Хомск хулинче çак кунсенче нациллe конференци пулса иртнĕ. Унта çĕршыври мĕнпур пысăк хуласемпе районсен представителĕсем пулнă. Конференцие пухăннисем Сири халăхне чĕнсе калакан çырăва пĕр саслă пулса йышăннă. Ку чĕнÿре вĕсем çĕнĕ конституци проектне тата халăх сасăлассине ирттерме хатĕрленес ĕçĕн меслечĕсене хытă критикленĕ. Халăх конституци проекчĕ пирки сасăлассине «халăха хытă хĕсĕрленĕ тата нимĕнле ирĕклĕх те çук условисенче, политикăлла партисене салатса янă лару-тăрура, хаçатсене хупнă е вĕсене çĕршыври ĕçсене çутатас енĕпе питех те хытă пÿлсе пынă лару-тăрура ирттерме палăртнă»,—тенĕ чĕнÿре.

Япони милитарисчĕсен планĕсем

ШАНХАЙ, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Японин Киодо Цусин агентстви çапла пĕлтернĕ: прогрессивла партие ертсе пыракансенчен пĕри—Хидедзи Кавасаки Япони парламенчĕн кĕçĕн палатин бюджет комиссине «Японие хĕтĕлемелли пилĕк çуллăх план» пирки çĕнĕ сведенисем тăратнă. Ку план çинчен нумай пулмасть пресс-конференцире «наци хăрушсăрлăхĕн управлени» начальникĕ Кимура каласа панă пулнă.

Çав план пирки Кавасаки акă мĕн каланă: Японие «хÿтĕлемелли» икĕ план пур. Çав плансенчен пĕрине Кимура хăй хатĕрленĕ, теприне—Япони çарĕпе тинĕс-çар флочĕн офицерĕсем пулнă çынсем е Америка влаçĕсем хатĕрленĕ.

Кимура хатĕрленĕ «а» текен планра Японин сывлăш çарĕнче 2.837 самолет, çав шутра авианосецсем çинче 954 истребительпе 920 самолет пулмалла тума палăртнă. Çав план тăрăх тинĕс-çар флочĕн пĕтĕм карапĕсен тоннажĕ 340 пин тонна чухлĕ, çав шутра 10 авианосец, 5 крейсер, 50 эсминец тата шыв айĕн çÿрекен 100 кимĕ пулмалла.

Иккĕмĕш «б» текен план тăрăх сывлăш çарĕнче 1.531 самолет, тинĕс çарĕнче 5 крейсер, 45 эсминец тата шыв айĕн çÿрекен 45 кимĕ пулмалла.

Кавасаки тухса каланинчен тата çакă паллă пулнă: Японие çĕнĕрен хĕçпăшаллантармалли план Америка çар пулăшăвĕ парассипе çыхăнса тăрать. Çав пулăшăва американецсем «хăрушсăрлăх тума пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен йышăннă закон» тăрăх пама шутлаççĕ.

Кавасаки каласа панă хыççăн «правительствăра тата влаçра тăракан либералсен партийĕнче пăтрашу пулни» çинчен пĕлтерет Киодо Цусин агентстви.

ТЕАТР

ЧАВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРЕНЧЕ — Кизел хулинчи драма театрĕн гастролĕсем. Июлĕн 11-мĕшĕнче «Твое личное дело».

Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА» — июлĕн 11-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче киносборник Сборника кĕрекен фильмсем: «Дружба», «Девочка в цирке», «Сказка у старого дуба», «Высокая горка». Ытти сеанссенче—«В одном универмаге», сеанссем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

«Росглаввинпром» Шупашкарти эрех комбиначĕ колхозсене, организацисене тата уйрăм граждансене çакăн çинчен пĕлтерет: комбинат тĕрлĕрен улма-çырла кирек мĕн чухлĕ те сутăн илет; укçине çийĕнчех тÿлеççĕ.

Улма-çырлана çак пунктсенче йышăнаççĕ:

Шупашкар хулинче — Коммунальнăй слободари 27-мĕш çуртра;

Çĕнтĕрвăрри хулинче — винпромра;

Улатăр хулинче — эрех заводĕнче.

ДИРЕКЦИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01447 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.